24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
ЯНВАРЬ
15
КĔÇНЕРНИКУН
12 (6037) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Вăтам шкулсен ответлă задачи

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ йышăннă программа тăрăх, вăтам шкулсен аслă класĕсенче паян-ыранах ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренмелли занятисем пуçланмалла. Çак программăна йышăнни Çутĕç Халăх Комиссариачĕн ахаль мероприятийĕ кăна мар, ку мероприяти вăл шкулсенчи занятисене вăрçă вăхăтĕнчи условисем хушнă пек çĕнетсе урăхлатмалли майсенчен пĕри пулса тăрать. Аслă çулпуç Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радиопа тухса каланă сăмахра кашни предприятие, кашни учреждение, кашни колхоза хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне кирлĕ пек çĕнетсе урăхлатма чĕнчĕ. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ йышăннă программа вăтам шкулсене Сталин юлташăн чĕнĕвне пурнăçлама пулăшакан майсенчен пĕри пулса тăрать. Çакăнпа пĕрлех, вăл программа вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакан çамрăксене практикăллă ĕçре кирлĕ конкретнăй специальность парать. Вăтам шкул ачасене вăтам образовани парать. Тĕрлĕрен общеобразовательнăй предметсене вĕреннипе пирĕн ачасем вăтам шкулсенчен наукăн нумай енĕсемпе паллашнă çынсем пулса тухаççĕ. Вăтам шкул вĕсене малалла татах та вĕренмелли аслă шкул алăкĕсене уçса парать.

Анчах та вăтам шкулсенчен çуллен нумай çĕршер пин йышпа вĕренсе тухакан çамрăксем аслă шкулсене пурте кĕмеççĕ, вĕсенчен нумайĕшĕ пĕр-пĕр ĕçе кĕрсе, производствăра ĕçлекенсем пулса тăраççĕ. Паллах, шкулта нимĕнле специальноçа та вĕренмен çамрăксемшĕн, вĕсем общеобразовательнăй предметсене практикăпа çыхăнтармасăр вĕреннĕ пирки, производствăри малтанхи çулсенче тĕрлĕрен йывăрлăхсем тĕл пулаççĕ. Çакăнтан илсе пăхсан, вăтам шкулсенче вĕренекенсене шкултан тухас умĕн пĕр-пĕр ĕçĕн специальноçне вĕрентсе хатĕрлеме кирли питех те паллă.

Ку тĕлĕшпе Молотов юлташ Пĕтĕм Союзри Коммунистсен Партин XVIII-мĕш съездĕнчех «халăх хуçалăхне аталантарассин виççĕмĕш пятилетка планĕ» çинчен тунă докладра культура строительстви çинчен каланă чух çакна асăрхаттарнăччĕ:

«Пит те нумай арçын ачасем тата хĕрачасем вăтам шкулсенчен вĕренсе тухаççĕ, вĕсем нумай чухне пĕр-пĕр практикăллă ĕçе каяççĕ, çавăнпа та вĕсем вăтам шкула пĕтерсе тухас тĕле вĕсене пулас практикăллă ĕç валли, хăшпĕр таран та пулсан, вĕрентсе хатĕрлеме кирли çинчен ыйту тухса тăрать. Ку пит те кирлĕ ыйту, ун пирки Çутĕç Халăх Комиссариачĕсем, тата Çутĕç Комиссариачĕсем çеç мар, ыттисем те ĕçлеме тивĕçлĕ», тенĕччĕ Молотов юлташ.

Вăтам шкулта ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренмелле туни—шкулсенчен вĕренсе тухакансене вăрçă вăхăтĕнче тата вăрçă хыççăнхи тапхăрта шкултан практикăна куçса ĕçлеме конкретнăй специальность парать.

Гитлерла Германи империалисчĕсене хирĕç отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра пирĕн çĕршыв оборонишĕн колхозлă ялхуçалăхĕ промышленноçпа юнашарах питех те паллă вырăн йышăнса тăрать. Промышленность Хĕрлĕ Çарпа фронта тĕрлĕрен хĕçпăшал, танксем, самолетсем, тумтир тата ытти те туса парать; колхозлă ялхуçалăхĕн çак вăхăтра ытларах тырă, аш-какай, сĕт-çу, пахча-çимĕç тата промышленность валли кирлĕ чĕртаварсем хатĕрлесе парса тăмалла. Промышленноçпа ялхуçалăхĕ хĕçпăшал, ĕçме-çимелли тата тăхăнмалли тумтир таврашĕ çителĕклĕ парса тăрсан, пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар татах та вăйланса, нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çапса аркатма пултарать. Çавăнпа та пирĕн мĕнпур майсемпе хамăрăн ялхуçалăх производствине тата ӳлерех виçене хăпартса пымалла.

Çакна та асра тытмалла. Пирĕн аслă çĕршывăн чылай районĕсене тăшман çаратса тустарса тăкнă. Çак районсене ирĕке кăларнă хыççăн та унти халăх хăй валли тата государствăна кирлĕ тырра часах çителĕклĕ таран туса тăма пултараймасть. Тăшман ишсе е çунтарса пĕтернĕ хуласемпе ялсене çĕнĕрен юсаса лартиччен, унти халăх сывлăш çавăриччен пирĕн вĕсем валли те тырпул туса илмелле пулать.

Çапла, пирĕн умма вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешес задача тухса тăрать. Çакна тума ялхуçалăхĕн агротехникине вăйлăлатмалла.

Агротехника хушакан пур правилăсене те пурнăça тĕплĕн кĕртсе пыма колхозлă ялхуçалăхне нумай специалистсем: агрономсем, машинистсем, животноводсем тата ыт. те нумай кирлĕ. РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн программи çав специалистсене—çĕр ĕçне ăста пĕлекен квалификациллĕ работниксене—вăтам шкулсем урлă хатĕрлесе кăларма май парать. Вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакан çамрăксем, вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çар ретне кайнă трактористсен, комбайнерсен, агрономсен вырăнне тăрса,—колхозлă ялхуçалăхне çĕнĕ вăйсемпе малалла илсе пырĕç.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕн программи вăтам шкулăн аслă класĕсенче вĕренекенсене çĕрĕçĕн агротехникипе тĕплĕн паллаштарать, çакăнпа пĕрлех ĕç выльăхне мĕнле пăхмаллине, çĕрĕç машинисемпе мĕнле ĕçлемеллине тата ыт. те вĕрентет. Ку ĕçсене пĕр теорипе кăна мар, практикăпа çыхăнтарса анлăн вĕренсе пымалла. Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренесси вăтам шкулсен 7-мĕшпе 8-мĕш класĕсенчен тытăнса каять. Ку икĕ класра çĕрĕçĕн пуçламĕш правилисемпе тата ялхуçалăх производствин çăмăлрах машинисемпе çеç паллашаççĕ пулсан, 9-мĕшпе 10-мĕш класенче ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренмелли урокӗсем пысăкланаççĕ. Кусенче ятарласах хăйне уйрăм разделсемпе трактор тата унпа ĕçлесси çинчен, çаван пекех комбайн тата унпа ĕçлесси çинчен вĕренеççĕ. 9-мĕшпе 10-мĕш классенчен трактористсем тата комбайнерсем вĕренсе тухмалла. Кунсăр пуçне çак классемех çĕрĕç агротехникине лайăх пĕлекен специалистсем те памалла.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕн ялхуçалăхне вĕренмелли программи çутĕç органĕсемпе вăтам шкулсем умне пысăк задача кăларса тăратать. Ку задачăна вĕсен колхозсемпе тата МТС-семпе таччăн çыхăнса тăрса пурнăçламалла. Çĕнĕ предметăн урокĕсем çурри ытла практикăллă занятисемпе иртмелле. Çавăнпа та кунта çав практикăллă урокӗсене тĕплĕн ирттерме халех пур условисене те туса хумалла: вĕренмелли учебниксемпе пособисене пурне те хатĕрлесе çитермелле, кирлĕ ялхуçалăх машинисем хатĕр пулмалла т. ыт. те.

Совет шкулĕнчи учительсем отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа çĕршыва тата фронта пулăшас тĕлĕшпе нумай пысăк ĕçсем турĕç. Вĕсем, общеcтвăллă ĕçсене активлăн хутшăнса, халăх хушшинчи агитмассăллă ĕçе тимлĕн туса тăраççĕ. Çак учительсем ялхуçалăхне кирлĕ специалистсен кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе те пĕтĕм пултарулăхпа хурса ĕçлесси шанса тăмалла.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН
УКАЗĔ
ХĔРЛĔ ÇАРĂН НАЧАЛЬСТВО СОСТАВНЕ ОРДЕНСЕМ ПАРСА НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăça кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн çаксене наградăлас:

ЛЕНИН ОРДЕНĔПЕ

1. Батальоннăй комиссара Владимир Григорьевич **Сорокина.**
2. Генерал-майора Василий Иванович **Швецова.**

ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ

1. Генерал-майора Александр Дмитриевич **Березина.**
2. Генерал-майора Василий Иванович **Виноградова.**
3. Генерал-майора Сергей Георгиевич **Горячева.**
4. Дивизи комиссарне Кузьма Акимович **Гурова.**
5. Бригаднăй комиссара Николай Александрович **Истомина.**
6. Генерал-майора Кирилл Алексеевич **Коваленкона.**
7. Генерал-майора Константин Васильевич **Комиссарова.**
8. Батальоннăй комиссара Павел Федорович **Лебова.**
9. Генерал-лейтенанта Иван Иванович **Масленникова.**
10. Полковой комиссара Григорий Васильевич **Рябухина.**
11. Подполковника Павел Афанасьевич **Степаненкона.**
12. Подполковника Сергей Павлович **Тарасова.**
13. Полковника Порфирий Георгиевич **Чанчивадзене.**
14. Полковой комиссара Димитрий Иванович **Шершина.**

ХĔРЛĔ ÇАЛТĂР ОРДЕНĔПЕ

Бригаднăй комиссара Иван Петрович **Кабичкина.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1942 çулти январĕн 12-мĕш.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 13-мĕшĕнче фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçса малалла куçса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутрах **Киров** хулипе (Смоленск облаçĕ) **Дорохово** хулине (Можайск сывăхĕнче) йышăнса илнĕ.

Январĕн 12-мĕшĕнче нимĕçсенне 4 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 1 самолет пĕтнĕ.

* * *

Январĕн 12-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсенне 3 танк, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 380 ытла автомашинăна, боеприпассем тиенĕ 245 лава, 17 орудине прислугипе пĕрле, зенитнăй пулеметсен 9 точкине пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 56 вагона вут тĕрсе çунтарнă, боеприпассен 2 складне взрыв туса сирпĕтернĕ, противник пехотин полкне сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ефремов юлташăн боецĕсем (Хĕвеланăç фрончĕ), противника хирĕç вăйлăн çапăçса, пĕр кун хушшинче нимĕçсенне 63 автомашина, 53 пулемет, 33 мотоцикл тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Новиков юлташăн гвардеецĕсем, халăх пурăнакан К. пунктшăн хаяррăн çапăçса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи летчиксем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 170 автомашина, 13 оруди, боеприпассем тиенĕ вуншар лавсене пĕтерсе тăкнă. Станцисенчен пĕрин çине ăнăçлăн вĕçсе пырса, совет летчикĕсем станцири чугунçул çинчи темиçе эшелона çунтарса янă тата взрыв туса аркатса тăкнă. Станцине стройран кăларнă.

* * *

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче противник 260 çынлă йышпа пирĕн позицисене атакăланă. Пирĕн боецсем контрнаступлени туса тăшмана каялла хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 180 вилли выртса юлнă.

* * *

Хасанов сержант командир пулса ертсе пыракан красноармеец-автоматчиксен группи тăшман автоматчикĕсен взводне аркатса тăкнă. Хасанов юлташăн малтан персе янă пулли фашистла офицера вĕлернĕ. Бобровпа Аминов красноармеецсем противникăн 5 автоматчикне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче партизансен икĕ отрячĕ çапăçать. К. юлташăн отрячĕ темиçе кун хушшинче нимĕçсен 13 салтакне вĕлернĕ тата офицер ларса пыракан штаб машинине аркатса тăкнă. С. юлташăн отрячĕ çулсем çине минăсем хурса тухнă, нимĕç войскисем валли боеприпассемпе апат-çимĕçсене илсе пыма чăрмантарнă. М. ялĕ патĕнче партизансем çак кунсенче виçĕ лава сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсене 10 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. И. ялĕ çине тапăнса пынă чух отряд 8 гитлеровеца вĕлернĕ. Нумаях пулмасть отрядри боецсем нимĕçсен виçĕ офицер-летчикне тытса совет чаçĕн штабне илсе кайнă.

* * *

Нимĕçсен 13-мĕш танковăй дивизин 33-мĕш мотополкĕнчи 4-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ старший стрелок Герберт Блюн çапла каласа панă: «33-мĕш полк ентĕ 1600 çын ытла çухатрĕ. Кадровăй салтаксене нумайĕшне вĕлерсе тата амантса пĕтернĕ. Халĕ полкра резервистсем нумайрах. Вĕсен хушшинче 17 çулхи çамрăксем те тĕл пулаççĕ. Пирĕн ротăра мĕнпурĕ те 90 салтак çеç. Çав хисепре тăм илтерсе янă салтаксем 20 çын шутланаççĕ. Вăрçă вăраха пыни салтаксене питех те пăшăрхантарать. Халĕ ĕнтĕ эпир йывăрлăха кĕрсе ӳкнине нумайĕш ăнланса илме пуçларĕç. Кашниех харпăр хăйне çакăн пек ыйту парать: «пирĕнпе тата мĕн пулĕ-ши?»

* * *

Мускав облаçĕн Мало-Ярославец районĕнчи халĕ нимĕçсенчен ирĕке кăларнă Кудиново ялĕнчи граждăнсем Анна Афанасьевна Гайдарова тата Екатерина Петровна Формачева, Кудинова совхозĕнчи работниксем Семен Семенович Блинов, Кудиново ялĕнче пурăнакан çынсем тата военнослужащисем: батальоннăй комиссар Н. Н. Гришечкин, батальоннăй коммиссар М. Я. Ивонин тата старший политрук И. В. Козлов — Кудиново совхозра гитлерла тискер кайăксем хăрушла ирсĕр ĕçсем туса пурăнни çинчен январĕн 7-мĕшĕнче акт çырнă. Актра çапла каланă: «Нимĕç оккупанчĕсем совхозри сысна витинчен тыткăна лекнĕ красноармеецсем валли лагерь организациленĕ, вăл красноармеецсене çулйĕр юсанă çĕрте ĕçлеттернĕ. Çулйĕре юсаса çитернĕ хыççăн, тыткăна лекнĕ вуншар красноармеец пурăнакан сысна витине нимĕç оккупанчĕсем вут тĕртсе çунтарса янă. Граждăнла халăха пушара сӳнтерме ирĕк паман. Çунакан çуртран тухма хăтланакан тыткăна лекнĕ красноармеецсене нимĕçсем персе вĕлернĕ.

* * *

Германирен хăйсен çĕршывне тавăрăннă Данири рабочисем Германире ютçĕршыв рабочийĕсем валли ĕç условийĕсене каторгăри пек туса хуни çинчен каласа параççĕ. Вĕсене кашни кун 16—18 сехет хушши ĕçлеттернĕ. Пĕчĕк айăп пулсанах арестлеççĕ е персе вĕлереççĕ. Берлин сывăхĕнчи металлурги заводĕнче ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче ютçĕршыв рабочийĕсене 150 çынна ытла персе вĕлернĕ, вĕсен шутĕнче испанецсемпе итальянецсем тата поляксем те нумай. Çав заводри рабочисем вăйран тухнипе икĕ эрне хушшинче кăна 27 çын виллĕ.

Январĕн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 14-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Захаркин юлташăн войскисем (Хĕвеланăç фрончĕ), каялла чакакан противника хăваласа пырса, пĕр кун хушшинче нимĕçсенне 35 автомашина, 46 станковăй тата ручной пулемет, 24 автомат тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшал нумай тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн артиллеристсем, тупăсенчен тĕл персе тăрса, январĕн 12-мĕшĕнче тăшманăн çĕрпе йывăçран тунă 3 огневой точкине, 2 пулеметнăй точкине, наблюдательнăй пунктне пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен пысăк складне взрыв туса сирпĕнтернĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинче тăшманăн йывăçпа çĕртен тунă 7 огневой точкине аркатса тăкнă, 2 оруди, 3 пулемет, гранатомет тытса илнĕ тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Красноармеец Ларин нимĕç салтакĕсен ушкăнĕпе тĕл пулнă. Ларин юлташ çухалса кайман, вăл тăшмансем çине пеме пуçланă та тăватă гитлеровеца вĕлернĕ. Ыттисем каялла пăрахса тарнă.

* * *

Капельмейстер Кузанков вырăнти çынсенчен çывăхри çул тăрăх халăхран çаратса илнĕ япаласем тиенĕ нимĕç лавĕсем пыни çинчен пĕлнĕ те çул хĕррине пытанса ларнă. Наганран пĕррремĕш хут персен, вăл лав çинче ларса пыракан нимĕç офицерне вĕлернĕ. Кузанков юлташ ручной пулемет, автомат, 6 лаша тата япаласем тиенĕ пĕр лава тытса илнĕ.

* * *

Х. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Орел облаçĕн нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, 4 кун хушшинче 70 нимĕç оккупантне вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен юсавлă орудине, гранатăсемпе снарядсем тиенĕ 2 автомашинине, 65 винтовкине, станковăй пулеметне, 7 пин патрон т. ыт. çар хатĕрĕсем те нумай тытса илсе, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем вырнаçса тăнă вырăна çитерсе панă.

* * *

Тылра тата армире поражени тӳсес салхуллă кăмăл-туйăмсем ӳссе пынă пирки нимĕçсен командованийĕ шикленмеллипех шикленсе ӳкнĕ. 1941 çулти декабрĕн 18-мĕшĕнче нимĕçсен 263-мĕш дивизине панă приказра çапла каланă: «Салтаксен хăйсен тăван килĕсене яракан çырусенче снабжени пирки йывăрлăх тӳсни çинчен, вырăс хĕлĕ нимĕç салтакĕсен шухăш-кăмăлĕсемпе сывлăхне чакарса пыни çинчен çырма юрамасть. Çакна кашни чаçăнах лайăх пĕлсе тăмалла. Салтаксем патне килтен килекен çырусенче вăраха тăсăлнă вăрçă пирки халăх тӳссе ирттерекен тĕрлĕрен жертвăсемпе йывăрлăхсем çинчен асăннă пулсан, çав çырусене пĕтерсе тăкмалла. Салтаксен тăванĕсемпе хурăнташĕсене çакна кăтартса памалла: çырура шухăшламасăр çырнă кашни сăмахах питех те лайăх мар ĕç патне илсе çитерме пултарать». Çак приказрах тата çапла асăрхаттарнă: «Дивизин малашне татах та нумай йывăрлăхсем тӳссе ирттерме тивет. Инкеке пула тăшман аллине тыткăна лекекен салтаксен хăйсене ухмаха пемелле те Германи çарĕн хирĕç тăрас вăй-хăвачĕ тата çĕнтерӳ шанчăкĕ чакса пыни çинчен нимĕнле показани те памалла мар».

* * *

Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем каласа панă тăрăх, офицерсен приказне пурнăçлассине коллективлăн хирĕç тăнăшăн нимĕçсен 79-мĕш пехотнăй дивизийĕн 226-мĕш полкĕн командованийĕ Белгород районĕнчи Игуменка ялĕнче 93 салтака персе вĕлернĕ.

* * *

Курск облаçĕнчи Советски районри халĕ ирĕке кăларнă Мармыжи ялĕнче гитлерла бандитсем 300 çурт тата тĕрлĕрен çуртйĕрсем çунтарса янă. Пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхе, чăхсене, хурсене, тырра тата хресченсен пурлăхне гитлеровецсем туртса илсе, хăйсемпе пĕрле турттарса кайнă. Ялтан тухса тарнă чух гитлеровецсем 70 çулти хресченe Борис Макеевич Болоцкие тата 63 çулти Герасим Дмитриевич Кудрявцева чĕрĕллех çунтарса янă.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

Строительствăра ĕçлекенсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлласси çинчен

Строительствăна активлăн хутшăнса ĕçлесе, çав ĕçре хăйсене уйрăмах палăртнă колхозниксене, инженерно-технически работниксене тата партипе совет работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

КАЛИНИН РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Николай Ананьевич **Ананьева** — çĕр чавакансен бригадирне, Уйкас ялсоветне кĕрекен «Пĕрлешӳ» колхозăн председательне.
2. Елена Яковлевна **Григорьевăна**— çĕр чавакана, Юманай ялсоветне кĕрекен «Коминтерн» колхозăн колхозницине.
3. Василий Павлович **Журавлева** — платнике, Кӳлхĕрри Хапăс ялсоветне кĕрекен «Трактор» колхозăн колхозникне.
4. Никифор Ильич **Ильина** — çĕр чавакансен бригадирне, Уйкас Юнтапа ялсоветне кĕрекен Каганович юлташ ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
5. Мария Кондратьевна **Кондратьевăна**—çĕр чавакана, Уйкас ялсоветне кĕрекен «Пĕрлешӳ» колхозăн колхозницине.
6. Ульяна Максимовна **Максимовăна**—çĕр чавакана, Айкăш ялсоветне кĕрекен Киров ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.
7. Тихон Антонович **Можаева** — çĕр чавакансен бригадирне, Айкăш ялсоветне кĕрекен Киров ячĕпе тăракан колхозăн бригадирне.
8. Федор Павлович **Павлова** — çĕр чавакана, Уйкас Юнтапа ялсоветне кĕрекен Каганович ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.

ЕТĔРНЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

9. Михаил Илларионович **Китова** — çĕр чавакансен бригадирне, Талуй ялсоветне кĕрекен Ленин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.
10. Мария Сергеевна **Маловăна** —çĕр чавакана, Мăн Шемертен ялсоветне кĕрекен «Новое звено» колхозăн колхозницине.
11. Никита Петрович **Петрова**—звено руководительне, Талуй ялсоветне кĕрекен Ленин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.
12. Прокопий Васильевич **Рожкова** — звено руководительне, Кăкшăм ялсоветне кĕрекен «Красный маяк» колхозăн колхозникне.
13. Василий Сергеевич **Тараденкова**— платниксен бригадирне, Засурски ялсоветне кĕрекен «Красноармеец» колхозăн колхозникне.
14. Федор Димитриевич **Ярахтина** — звено руководительне, Мăн Шемертен ялсоветне кĕрекен «Новое звено» колхозăн бригадирне.

СĔНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

15. Николай Сергеевич **Галлактионова** —старший десятнике, Новински ялсовечĕн секретарьне.
16. Мария Ивановна **Громовăна** —çĕр чавакана, Упнер ялсоветне кĕрекен «Кустарь» колхозăн колхозницине.
17. Николай Максимович **Дождева**— çĕр чавакана, Упнер ялсоветне кĕрекен «Кустарь» колхозăн колхозникне.
18. Павел Егорович **Егорова** — çĕр чавакана, Юртукасси ялсоветне кĕрекен «Искра» колхозăн колхозникне.
19. Серафима Степановна **Кузьминана** —Юртукасси ялсовечĕн уполномоченнăйне, ĕçсынни депутачĕсен Сĕнтĕрвăрри район совет депутатне.
20. Петр Михайлович **Колчина** — платниксен бригадисен организаторне, Сĕнтĕрвăрринчи судоверфь инженерне.
21. Василий Терентьевич **Лаптева** — çĕр чавакана, Юртукасси ялсоветне кĕрекен «Моряк» колхозăн колхозникне.
22. Федор Георгиевич **Муравьева** — прораба, Сĕнтĕрвăрри хула совет исполкомĕн коммунальнăй отдел заведующине.
23. Андрей Петрович **Петрова**— платнике, Шуркасси ялсоветне кĕрекен Киров ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.
24. Раиса Семеновна **Семеновăна** — çĕр чавакана, Упнер ялсоветне кĕрекен «Наука Ленина» колхозăн колхозницине.
25. Евдоким Федорович **Федорова** — прораба, Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕн преподавательне.
26. Антон Евграфович **Шильдякова** — çĕр чавакансен бригадирне, Паникасси ялсоветне кĕрекен Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕн заместительне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулти январĕн 13-мĕш.

Колхозниксем 1942 çулшăн самообложени укçине тӳлеççĕ

ÇĔРПУ. **(Телефон тăрăх).** Районри чылай колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсем 1942 çулшăн культсбор тата самообложени укçисене тӳлеме тытăнчĕç. Вĕсем тӳлев извещенийĕсене илессе кĕтсе тăмаççĕ, государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра парса татса, тăшмана çĕнтерме Хĕрлĕ Çара пулăшма тăрăшаççĕ. Лапра-Кушкă ялсоветĕнчи «Шумашар» колхоз колхозникĕсем культсбор укçине пĕр кун хушшинчех пĕтĕмĕшпех парса татрĕç. «Красная Бавария» колхозри Марков, Афанасьев, Семенов, Филиппов, Сергеев тата ытти колхозниксем, пĕтĕмпе 20 çын, культсбор укçине парса татрĕç. Леонтьев, Семенов, Сорокин колхозниксем самообложени укçине парса татрĕç.

С. ПАВЛОВ.

Государствăна тырă сутаççĕ

ÇĔРПУ. Районри колхозсенче государствăна тырă сутас ыйтупа пухусем пулса иртрĕç. Колхозсемпе колхозницăсем, Хĕрлĕ Çара татах та ытларах ялхуçалăх продукчĕсем парса пулăшас майпа, государствăна тырă сутма пулчĕç.

Янсакасси ялсоветĕнчи «Политотделец» колхоз государствăна 30 центнер, «Ким» колхоз 25 центнер тырă сутаççĕ. П. Яковлев, М. Яковлев, Анисимов, Митрофанов колхозниксем хăйсен ытлашши тыррине государствăна кооператив урлă сутаççĕ.

Çавăн пекех Первомайски ялсоветĕнчи «Пожанар» колхоз та государствăна 35 центнер тырă сутать.

С. П.

* * *

ВĂРНАР. Мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, колхозниксем фронта пулăшассине вăйлатсах пыраççĕ. Районри колхозсем хăйсен ытлашши тыррине кооператив урлă государствăна сутма тытăнчĕç. Çак кунсенче «Комсомолец» колхоз—1075 килограмм, Кăмашри Сталин ячĕпе тăракан колхоз—3853 килограмм, Вăрманкасри «Самолет» колхоз—1870 килограмм, Иртеменкассинчи «Победа» колхоз—11,76 центнер тырă государствăна сутрĕç. Районри колхозсем государствăна пĕр кун хушшинчех 28 тонна ытла тырă сутнă.

В. МАКСИМОВ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Çĕршыва фронт валли тырпул çителĕклĕ туса парар, тесе районри колхозниксемпе колхозницăсем. Кашни колхозникăн шухăш-кăмăлĕ вăрçă кунĕсенче тăван çĕршыва ытларах пулăшассишĕн вĕресе тăрать. Халĕ колхозниксем государствăна тырă сутма тытăнчĕç.

«Сатурн», «Новый путь», «Страж революции», «Коминтерн» колхозсен колхозникĕсем государствăна 50-шар центнер тырă сутма йышăннă. Çавнашкалах «Искра» колхоз членĕсем—40 центнер, «Новая жизнь» колхоз—25 центнер сутнă.

Я. СИГАЙ

Гитлерла вандалсем-аркатуçăсем Ясная Полянăри хăйсен преступленийĕсене пытарса хăвараймĕç

ССР Союзĕн Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Вячеслав Михайлович Молотов 1942 çулти январĕн 6-мĕшĕнче панă хăйĕн нотинче нимĕç оккупанчĕсем Лев Николаевич Толстойăн музей-усадьбине вăрă-хурахла çаратса ишĕлтерни çинчен, фашистла варварсем аслă писателĕн памятникĕнчен çавтери ирсĕррĕн те тискеррĕн мăшкăллани çинчен пĕтĕм тĕнчене каласа панă.

Тĕнчери обществăллă шухăшран хăйсен преступленийĕсене пытарса хăварас тата В. М. Молотов юлташăн нотинче кăтартса панă чăн тĕрĕс материалсене «сирсе ярас» тесе, Германи информаци бюровĕ хăйне уйрăм заявлени тунă, анчах та çав заявлени хăех Ясная Полянăра хуçаланнă гитлерла вăрă-хурахсене тăрă шыв çине кăларать. Германи информаци бюровĕ январĕн 9-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: «Ясная Полянăри музей инвентарĕсене большевиксем йăлтах илсе тухса кайнă пулнă, çапла вара çак пункта Германи войскисем йышăнса илнĕ чухне унта, стенасем çумĕнчи хăшпĕр илемлĕхсемсĕр, урăхла каласан, Толстой хăй ӳкернĕ хăшпĕр картинăсемсĕр пуçне, нимĕн те тăрса юлман» тенĕ.

Ку таранччен мĕнпур культурăллă этемлĕх Толстой картинăсем мар, романсем çырнине питĕ лайăх пĕлсе тăнă. Анчах та гитлерла ухмахсене пурĕ-пĕрех: вĕсем хăйсен пуçкасаканĕсем вăрласа тухнă картинăсене «тĕпчесе», вĕсене Толстой «ӳкернине» пĕлнĕ иккен. Ку чăнах та ĕнтĕ цинизмпа культурăсăрлăхăн, сĕмсĕрлĕхпе намăссăр суйăвăн ирсĕр хутăшăвĕ!

Хăйсен яланхи йăли тăрăх, фашистла суеçĕсем хăйсен «опровержениюĕнче» хăйсем мĕн çырнине çийĕнчех манса каяççĕ. «Ясная Полянăри музей инвентарьне большевиксем йăлтах илсе тухса кайнă», тесе пĕлтерсе, çав çыравçăсем, нимĕн шухăшласа-туса тăмасăрах, «илсе каймасăр юлнă музей инвентарьне Германи командованийĕ тĕрĕс-тĕкĕл сыхласа усранă», тесе сӳпĕлтетеççĕ. Шăпах ĕнтĕ хăй илсе кайнă япалана каялла таварса парасшăн мар пулса: «Чи малтанах, эпĕ санран чӳлмек илмен, унтан, эпĕ сана ăна таварса панă, юлашкинчен, эпĕ ăна ватса пăрахнă», тесе кутăнланакан карчăк пекех.

ССР Союзĕн Наукăсен Академийĕн Комиссийĕ çырнă акт Германи информаци бюровĕнчи жуликсене пĕлĕмпех тăрă шыв çине кăларать.. Ку комисси составне Лев Николаевичăн внучки Софья Андреевна Толстая, архитектура академикĕ А. В. Щусев, архитектура профессорĕ В. А. Кондрашев, Ясная Полянăри музее пăхса усракан С. И. Щеголев, Наукăсен Академийĕн член-корреспонденчĕ И. И. Минц, Л. Н. Толстой ячĕпе тăракан государственнăй музей фончĕн заведующийĕ Е. Н. Чеботаревская, Л. Н. Толстой произведенийĕсен академилле издани редакторĕ Н. С. Родионов, Наукăсен Академийĕн капитальнăй строительство начальникĕ инженер И. И. Бодалев тата профессор Е. Н. Городецкий пулнă. Эпир çак актăн хăшпĕр вырăнĕсене илсе кăтартатпăр:

«Пĕлă музейĕн пŭлĕмĕсене тата Толстойăн ывăлĕн Сергей Львович Толстойăн пŭлĕмне йышăнса илсен, фашистсем, отмычкăсемпе усă курса, питĕрнĕ шкафсен çăраççийĕсене çĕмĕрнĕ. Çавăнта вара шкафран Лев Николаевич Толстой Ясная Полянăран тухса кайиччен юланутпа çӳренĕ чухне усă курнă йĕнер тата Ясная Поляна районĕнчи хресченсен тĕрлĕ ĕмĕрсенчи кĕпе-тумтирĕсене, этнографи тĕлĕшĕнчен халăх япаласем пулса тăраканскерсене, вăрласа тухса кайнă. Çак кĕпе-тумтирсене, çавнашкалах тата Сергей Львович Толстойăн шкафĕнчи кĕпе-тумтирсене те фашистсен офицерĕсем пĕр-пĕрин хушшинче валеçсе салатса пĕтернĕ».

Малалла акт çумне 5-мĕш №-пе хушса кĕртнĕ документăн пĕр пайне кăтартса парар. Ку документра Германи войскисем Ясная Полянăра мĕнле-мĕнле «трофейсем» тытса илнине хисеплесе тухнă:

«1. Лев Николаевич хăйĕн пурнăçĕн юлашки кунĕсене çитиччен юланутпа çӳренĕ чухне усă курнă йĕнер;

2. Стена çумне çакмалли çавра сехет;

3. Л. Н. Толстойăн тĕрлĕ вăхăтри пурнăçне кăтартса паракан, паха документсем пулса тăракан питĕ нумай фотоӳкерчĕксем;

4. Мемориальнăй библиотекăри кĕнекесенчен пĕр пайĕ;

5. «Переписка Л. Н. Толстого» ятлă материалсен Толстой патне çырнă çакăр подлиннăй çырупа конвертсем (çак экспонатсене инвентарь спискĕ тăрăх хисеплесе пулнă);

6. Софья Андреевна Толстаян пŭлĕмĕнчи шкафсенчен çĕмĕрсе кăларса илнĕ тĕрлĕ вак-тĕвек япаласем;

7. Л. Н. Толстойпа пĕрле пурăннă Маковицкий докторпа И. В. Сигорский врачĕсем çинчи простыньсемпе [illegible]сем, одеялсем, минтерсем;

8. Ясная Полянăри хресченсен авалхи [illegible]сем;

9. [illegible]50 метр тăршшĕ ковер вăрласа [illegible].

[illegible]р пуçне тата çаксене вăрласа [illegible]е çунтарса янă:

1) Л. Н. Толстой хăй тунă кĕнекесем хумалли çӳлĕк, ку çӳлĕк унăн кабинетĕнче пулнă;

2). Библиотека пŭлĕмĕнчи, секретарь пŭлĕмĕнчи, залри тата С. А. Толстаян пŭлĕмĕнчи чӳрече кармаллисем;

3) буфетри стойка.

Л. Н. Толстой çуралнă дивана çурса пăрахнă».

Хăйсен ирсĕр ĕçĕсене тунă вăхăтра пырса тытнă Гитлерăн вăрă-хурахĕсем айăпĕсене пур майсемпе те хăйсем çинчен сирсе ярасшăн. Вĕсем çапла калаççĕ: Ясная Полянăра аркатса пĕтернисем, ишĕлтернисем çинчен каланисене «фактически материалсем сирсе яраççĕ, çавăн пек сирсе янине çынсем каласа панисем тата фотоӳкерчĕксем çирĕплетсе параççĕ». Жуликсемпе шулерсем хăйсем тӳрĕ кăмăллă тесе хăйсене хăйсемех ĕнентерӳ параççĕ, çак тĕлĕшпе ĕнтĕ уголовнăй ĕçсен практикинче вĕсемпе танлашма пултараканни ку таранччен те пулман. Германи информаци бюровĕн пĕлтерĕвĕнче ниепле свидетельсем каласа панине те кĕртмен. Вĕсем пулма та пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен Гитлерăн «Германи информаци бюровĕ» ятлă ведомствин нимĕç генералĕ, музея пырса кĕрсен хăйĕн офицерĕсене Толстой музейĕнчен «асăнмаллăх» картинăсем вăрласа тухма распоряжени панăскер, каласа панисене кăна илсе кăтартма пултарать. Анчах та çав чи пысăк вăрă, çаратуçă, Толстойăн музейне çаратассине организацилекенĕ каласа пани мĕн хака тăма пултартăр-ха!

Наукăсен Академийĕн комиссийĕн актĕнче çаксене кăтартса панă:

«Çуллă сăрпа ӳкернĕ картинăсем:

1. Салтанов художникăн «Въезд в усадьбу Ясная Поляна» картини.
2. Петров художникăн — «Партизаны в 1812 г».
3. Саврасов ĕçĕнчен ӳкерсе илнĕ копи—«Изба в Филях».
4. Паллăмар художникăн— «Переход через Березину».
5. Гильберт художникăн — «Левин на сенокосе».
6. И. Е. Репин картининчен Соломин художник ӳкерсе илнĕ копи — «Толстой пашет».
7. Шестопалов художник картининчен ӳкерсе илнĕ копи—«Разгром помещичьей усадьбы».

Акварель сăрпе ӳкернĕ картинăсем:

1. Гильберт художникăн «Дом Волконского» картини.
2. Пастернак картининчен Глебов художник ӳкерсе илнĕ копи—«Наташа на балу».
3. Боклевский художник картининчен Глебов художник ӳкерсе илнĕ копи—«Пьер Безухов».
4. Н. Ушакова художницăн «Лев Толстой и Николай II» картини.
5. Севастополе хупăрласа тăнă вăхăтри гравюра — «Взятие Малахова Кургана».

Толстой музейĕн харпăрлăхĕ пулса тăракан картинăсене, фашистсен «искусство специалисчĕсем» «тĕпчесе» пĕлнĕ тăрăх «Толстой хăй çырнăскерсене», Гитлерăн вăрă-хурахла войскисем вăрлани çинчен калакан фактсем çакăн пек ĕнтĕ.

«Гитлер тата унăн кампанийĕ» ятлă картла вылямалли çуртри жуликсен шучĕпе нимĕç вăрă-хурахĕсене тасана кăлармалли фотоӳкерчĕксем тĕлĕшĕнчен илсен, кун пек фотоӳкерчĕксем музейран вăрласа кайнисем çеç пулма пултараççĕ; советăн фотодокументсем, гитлеровецсем Ясная Полянăра мĕнле-мĕнле аркатусем тунине ӳкерсе илнĕскерсем, гитлеровецсене вĕлермеллех пырса çапакан, никам та хирĕçлеме пултарайман доказательствăсем пулса тăраççĕ. Тĕнчери обществăллă шухăш, çак документсене алла илсен, гитлерла Германия этемлĕхĕн культурăллă çитĕнĕвĕсене хирĕç пуçласа янă хăйĕн ирсĕр походĕнче мĕнтери лапăрчăк ăшне путса ларнине татах та тепĕр хут курса ĕненме пултарать.

Германи информаци бюровĕ малалла çапла çырать: «Толстойăн çуртĕсем тĕлĕшпе илсен, кунта сăмах лайăх сыхланса юлнă икĕ шурă çурт çинчен пырать, çакăнта икĕ çуртран тĕп çуртĕнче музей пулнă». Хăйсен ирсĕр ĕçĕсене тунă вăхăтрах пырса тытнă Гитлерăн вăрă-хурахĕсем куçкĕретĕнех курăнса тăракан фактсене тунас тĕлĕшпе хăйсенчен те иртсе, кайма çирĕп йышăнса хунă пулас. Фактсем çаксене кăтартса параççĕ:

1. Музей пĕр çуртра çеç мар, икĕ çуртĕнче те пулнă. Германи командованийĕ кăтартса панă тăрăх, икĕ çуртри экспонатсене те тула кăларса пăрахнă, пĕтерсе тăкнă, çаратса пĕтернĕ;

2) Çывăхрах больницăн питĕ лайăх çурчĕ пулнă пулин те, фашистсем хăйсен лазаретне больницăна мар, музее вырнаçтарнă; çапла тунине вара вĕсем вырăс халăхĕн культура памятникĕсем çине хăйсем варварла йĕрĕнчĕклĕн пăхнине кăтартса памалли чи лайăх мел пулса тăрать тесе шутланă;

3) «Лайăх сыхланса юлнă шурă çуртсем» тĕлĕшпе илсен, Наукăсен Академийĕн комиссийĕ акă мĕн палăртнă: нимĕçсен чаçĕсем усадьбăран тасалса тухса кайнă хыççăн, унта сăмăл автомашинăпа нимĕçсен штабĕнчи виçĕ офицер пырса çитнĕ. Вĕсем çурта çĕмĕрсе кĕнĕ. Вĕсен каюшинчех çунакан шĕвек тултарнă ытлашши пысăках мар баксем пулнă. Виçĕ пӳлĕмре—библиотекăра, Лев Николаевичăн çывăрмалли пӳлĕмĕнче тата унăн арăмĕн С. А. Толстаян çывăрмалли пӳлĕмĕнче вĕсем улăмран, сĕтел-пукан таврашĕн йывăç пайĕсенчен кăвать хунă та, çунакан шĕвек сапса вут тивретсе хăварнă. Л. Н. Толстойăн çывăрмалли пӳлĕмĕнче кăвате шăпах Толстойăн кровачĕ ларнă вырăна хунă. Телее, ку ĕçе нимĕçсем питĕ васкаса тунă: фашистсем хăйсене хупăрласа илесрен хăранă, çавăнпа та васканă. Хăйсен ĕçне вĕçне çитиччен туса пĕтермесĕрех офицерсем тухса тарнă. Вĕсем кайнă хыççăн çийĕнчех музей сотрудникĕсем çурта сыхласа хăварас тесе, пушара сӳнтерме тытăннă. Шыв пулман, пушар сӳнтермелли хатĕрсене нимĕçсем пĕтерсе тăкнă. Юхăнса кайнă пĕр çăлран аран шыв кăларнă. Музей сотрудникĕсемпе çамрăксем хăйсен паттăрлăхне кăтартса тăрăшнипе пула, пушара сӳнтернĕ, çапла вара Толстой çуртне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкассинчен çăлса хăварнă.

Наукăсен Академийĕн Комиссийĕ пушар мĕнле сиенсем туни çинчен çырнă 2-мĕш №-лĕ актăн хăшпĕр вырăнĕсене илсе кăтартатпăр:

«1 §. Иккĕмĕш хутри библиотека пӳлĕмĕнче, план тăрăх 34-мĕш №-лĕ пӳлĕмре, таса урайăн 50 процентне çунса кайнă, маччан 20 процентне чердака тухиччен çунса шăтнă, стенасенчи штукатуркăн 50 процентне çунса, хăйпăнса пĕтнĕ, икĕ алăк янаххи-мĕнĕпех çнуса пĕтнĕ, алăкăн пĕр енĕ пачах таçта çухалнă.

2 §. Л. Н. Толстойăн çывăрмалли пӳлĕмĕнче (37-мĕш №-лĕ пӳлĕм) урайăн 50 процентне çунса кайнă, штукатуркăн 20 процентне пăсалса тата хăйпăнса пĕтнĕ.

3. §. Мĕнпур çурчĕпех чӳречесен 80 процентне ватса пĕтернĕ.

4 §. Софья Андреевнăн çывăрмалли пӳлĕмĕнче (39-мĕш №-лĕ пӳлĕм) виçĕ урай хăмине хуçнă, чӳречене çунтарса янă».

Çапла ĕнтĕ, музей çуртне пачах пĕтерсе тăкманни фашистла вут тивретекенсен айăпĕ мар, вĕсен инкекĕ пулса тăрать, мĕншĕн тесен вĕсем музее тĕппипех çунтарса ярас тесе, мĕн кирлине пурне те тунă пулнă. Çакăнта каланисем пĕр музее çеç мар пырса тивеççĕ. Нимĕçсем хăйсем умне вырăссен аслă писателĕн ячĕпе тата асаилĕвĕпе çыхăнса тăракан япаласене пурне те çĕр çинчен шăлса тасатас задачăна лартнă пулнă. Фашистла мракобессем Толстой ячĕпе тăракан шкула, Толстой ячĕпе тăракан амбулаторипе больницăна малтан ишĕлтерсе пĕтернĕ, унтан çунтарса янă, Толстой хăй аллипе тунă япаласене пĕр пайне, татăкăн-татăкăн вакласа пĕтернĕ, тепĕр пайне çунтарса янă; Толстой хăй лартса çитĕнтернĕ йывăççене касса пĕтернĕ, Толстойăн хушаматлă альбомĕсен страницисем çинче хăйсен свастикине сăрласа тухнă. Актран илсе кăтартнă хăшпĕр вырăнсем те тата хăйсем курнă, нимĕçсен асапĕпе мăшкăлне хăйсем тӳснĕ çынсем каласа панисем те нимĕçсем Ясная Полянăра тискеррĕн хуçаланнин картинине кăтартса пăраççĕ. Ясная Полянăри музей-усадьбăна пăхса усракан Щеголев юлташ каласа панисене стенографипе çырса илнин хăшпĕр вырăнĕсене илсе кăтартса паратпăр:

«Октябрĕн 31-мĕшĕнче нимĕçсем С. Л. Толстойăн, Лев Николаевич ывăлĕн, пӳлĕмне йышăнса илчĕç. Мана çакăн пек япала тĕлĕнтерсе пăрахрĕ: хăйне штабран тенĕ офицер, хăйĕн хушаматне каламанскер, пӳлĕме пушатмашкăн çине тăрсах хĕсме тытăнсан, эпĕ: ку пӳлĕм уйрăм çынăн харпăрлăхĕ, музейшĕн вăл, ытти пӳлĕмсем пекех, хаклă пулса тăрать, тесе каларăм. Ку пӳлĕмĕн хуçи ăçта, тесе ыйтрĕ вăл: Эпĕ Сергей Львович Мускаврă, тесе таврăнтăм. Вара вăл, манпа калаçмасăрах, шкафа çĕмĕрме тытăнчĕ. Вăл шкафа мĕнтери ăста çĕмĕрсе уçнине пăхса тăрса тĕлĕннипе манăн куç-пуç чарăлсах кайрĕ. Вĕсен пурин те хĕскĕч евĕрлĕ отмычкăсем пур. Сергей Львович пӳлĕмĕнчен вăл темиçе стакан илчĕ те вĕсене кĕсьине чикрĕ. Унтан, шкафăн аялти ещĕкне çĕмĕрсе уçса, офицерпа пĕр врач Сергей Львовичăн кĕпе-тумтирĕсене — простынисене, алшăллисене тата ытти япалисене те пĕр-пĕрин хушшинче валеçрĕç. Офицерсенчен пĕри Лев Николаевич Толстойăн мемориативнăй пĕлтерĕшлĕ виçĕ фотоӳкерчĕкне илсе чикрĕ. Эпĕ ăна сăмахпа хирĕç тăма пуçларăм, ку мемориативнăй япала тесе, инвентарь номерне кăтартрăм, ку фото-ӳкерчĕкшĕн эпĕ ответ тытатăп, тесе каларăм. Вăл ахăлтатса кулса ячĕ те çав фотоӳкерчĕксене хăйпе пĕрлех илсе тухса кайрĕ».

Акă фашистсен ытти преступленийĕсен спискĕ:

«5 §. Музейăн картишĕнчен нимĕçсем выльăх пусмалли вырăн туса хучĕç. Йывăçсем çинче, çунтарса яма ĕлкĕреймен хӳмесем çинче çакăнтах пуснă сыснасен, ĕнесен тата ытти выльăхсен какайĕсем çакăнса тăнă.

6 §. Çуртпа юнашарах типĕ вутă запасĕ пулнă пулин те, фашистсем кăмакасем хутма тата кăвать хума мĕнпур хӳме-картасемпе тенкелсене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Хăйă тумашкăн Л. Н. Толстой кабинетĕнчи кĕнекесем хумалли çӳлĕке, буфетри стойкăна тата нумай картинăсемпе портретсен авалхи стильлĕ рамисене ватса пĕтернĕ.

8 §. Хуçалăхри мĕнпур инвентаре: урапасемпе çунасене, ут таврашĕсене тата ыттисене те пĕтерсе тăкнă. Музей хуçалăхĕн харпăрлăхĕ пулнă 12 ĕнерен 3-шĕ çеç чĕрĕ юлнă, вĕсене те музей сотрудникĕсем тăрăшнипе кăна сыхласа хăварнă. Хуçалăхри 4 лашаран пурне те илсе тухса кайнă, мĕнпур выльăх апатне пĕтерсе тăкнă». (ССР Союзĕн Наукăсен Академийĕн Комиссийĕ çырнă 1-мĕш №-лĕ актран).

Фашистсем çунтарса янă шкулпа больницăран мĕн тăрса юлни çак материалсенчен курăнса тăрать:

«1) Пушар çуртăн мĕнпур ăшне, çивиттийĕ-мĕнĕпех, пĕтерсе тăкнă. Стенисем çеç сиенленмесĕр юлнă;

2) Больница общежитин йывăç çурчĕ пĕтĕмпех çунса кайнă;

3) Учительсем пурăнакан çурт, чул стенисемсĕр пуçне, пĕтĕмпех çунса кайнă». (ССР Союзĕн Наукăсен Академийĕн Комиссийĕ çырнă 3-мĕш №-лĕ актран).

«15 §. Шкулта ĕçлекен пур работниксене те шкул çурчĕсенчен хăваласа кăларса янă. Вĕсене вара ялти колхозниксем хăйсем патне вырнаçтарнă. Вĕсен тăрса юлнă мĕнпур пурлăхĕсене çаратса пĕтернĕ. Халĕ ĕнтĕ шкул работникĕсем çурт-йĕрсĕр тăрса юлнă, мĕншĕн тесен шкула мĕнпур çурт-йĕрĕсемпех çунтарса янă.

16 §. Шкулăн 18.000 томран тăракан мĕнпур библиотекине, мĕнпур вĕренӳ оборудованине, нагляднăй пособисене, микроскопсене т. ыт. те пĕтерсе тăкнă. Библиотекăн пысăк пайне кăмакасенче тата шкул тавра хурса тухнă кăвайтсем çинче çунтарса янă, тепĕр пайне çаратса пĕтернĕ». (ССР Союзĕн Наукăсен Академийĕн Комиссийĕ çырнă 1-мĕш №-лĕ актран).

Л. Н. Толстой усадьбинчи амбулаторипе больницăна пăхса тухнă хыççăн, çакăн пек ишĕлтерсе пĕтернине палăртнă:

«1) Амбулатори çурчĕ тĕппипех çунса кайнă;

2) Больница çуртĕнчен лаша витти туса хунă;

3) Медицина работникĕсен общежитийĕ тата тухтăрсен виçĕ уйрăм çурчĕ тĕппипех çунса кайнă». (ССР Союзĕн Наукăсен Академийĕн Комиссийĕ çырнă 4-мĕш №-лĕ актран).

Аслă писателе аса илмелли япаласенчен тискер кайăкла юри мăшкăлланине хирĕç пĕтĕм тĕнчери обществăллă шухăш тарăхассинчен шикленсе ӳкнĕ гитлерла çаратуçăсем васкасах хăйсен ирсĕр йĕрĕсене пытарма тăрăшаççĕ, вĕсем çапла калаççĕ: «Толстойăн паркĕпе именине советсем хăйсем минăсем лартса тухнă», «мина лартнă çак уйсенче вырăнти халăх нумай вилсе пĕтнĕ, мĕншĕн тесен минăсене юр хĕвсе кайнă пулнă». Çакă вăл суйса хартран вĕçерĕннĕ тата хăйсен ирсĕр ĕçĕсене тунă вăхăтрах пырса тытнă бандитсен ăнăçсăр ултавĕ пулса тăрать. Нимĕç оккупанчĕсем Ясная Поляна районĕнче хуçаланнă вăхăтра вырăнти халăх хушшинче чăнах та ĕнтĕ жертвăсем пулнă. Октябрĕн 29-мĕшĕнче фашистсем пăрахнă бомба çурăлса кайнипе Ясная Поляна колхозĕн председателĕ Павел Давыдович Орехов вилнĕ, ноябрĕн 14-мĕшĕнче фашистсем Ясная Поляна колхозĕнчи колхознике Михаил Иванович Власова, çывăхри Волково ятлă ял çыннине, Н-ски заводра ĕçленĕ рабочине çакса вĕлернĕ. Рабочин ятне халĕ те пĕлмен-ха. Çак çынсем совет минисем çине пырса кĕрсе сирпĕнсе кайман-ши? Минăсем лартнă уй-хире юр хĕвсе кайнă тесе каланине илсен, октябрь уйăхĕнче, нимĕçсем Ясная Полянăна тытса илсе çаратнă вăхăтра, унта нимĕнле юр таврашĕ те пулман. Кунсăр пуçне тата Ясная Полянăна тытса илнĕ хыççăн тепĕр, икĕ кунтанах нимĕçсем çак минăсем лартса тухнă уй текен вырăна хăйсен госпитальсенче вилнĕ салтакĕсене пытарнă.

Наукăсен Академийĕн Комиссийĕ çакна тĕпчесе палăртнă:

«Октябрĕн 31-мĕшĕнче госпитальре вилнĕ фашистсене Толстойăн вилтăпри çывăхĕнче пытарма пуçланă. Толстойăн вилтăпри таврашĕнчи вырăн масар тума пит те юрăхлă мар. Толстойăн вилтăприйĕ вăрманта выртать, кунта шăтăк чавма кансĕрлекен тымарсем питĕ нумай. Толстойăн вилтăприйĕ усадьбăран 1 километр аякра. Масар тума юрăхлă пушă, уçланкăсем çурт таврашĕнчех пур. Анчах çапах та Толстойăн çуртĕнчен туса хунă «госпитальре» вилнĕ фашистсене пытармалли вырăна, музей сотрудникĕсем хирĕç тăнă пулин те, Толстой вилтăпри çывăхĕнче суйласа илнĕ. Çакна вĕсем Совет Союзĕнчи халăхсем тата тӳрĕ шухăшкăмăллă мĕнпур этемлĕхĕн культурăллă-историллĕ таса пуянлăхĕсенчен, аслă писателĕн памятникĕнчен юри мăшкăллас шутпа тунă. Толстой вилтăпри тавра фашистсен свастикăллă тата нимĕç чĕлхипе çырнă çырусемлĕ 75 хĕрес лартса тухнă».

Хăйсен салтакĕсен виллисене Л. Н. Толстой вилтăприйĕ патĕнче пытарма нимĕçсен пĕр тĕллев çеç пулнă: вырăс халăхĕн нациллĕ кăмăл-туйăмне кӳрентересси, вырăссен аслă писателĕн памятникĕнчен мăшкăлласси пулнă. Германи информаци бюровĕ «вырăссен минисем» çинчен ухмахла шухăшласа кăларнисем ĕнтĕ стена çумне хĕстерсе хунă, преступниксем хăйсене çăлса хăварас тĕлĕшпе жуликла ăнăçсăр тапăçланни çеç пулса тăрать.

Çапла ĕнтĕ, Германи информаци бюровĕ хăйĕн «опроверженийĕпе» татах та тепĕр хут намăсла путланса ларчĕ. Халĕ ĕнтĕ никам сирсе ямалла марах çаксене палăртса çирĕплетнĕ.

1) Германи командованийĕ, Гитлерăн директивине пурнăçа кĕртсе пырса, Ясная Полянăна йышăнса илнĕ чухне вырăссен тата тĕнчери литературăн аслă классикĕн ячĕпе тата асаилĕвĕпе çыхăнса тăракан пуянлăхсемпе паха япаласене пурне те аркатса, пĕтерсе тăкас тĕллеве лартнă. Ясная Полянăна пырса кĕрсен малтанхи минутăсем хушшинчех, фашистсем малтанах хатĕрлесе хунă план тăрăх, музей-усадьбăна организованнă аркатма тытăннă. Унтан вĕсем Ясная Полянăра пулнă мĕнпур вăхăт хушшинче хăйсен аркатмалли эреллĕ планне тăтăшах пурнăçа кĕртсе пынă. Германи офицерĕсемпе, салтакĕсем, Германи командованийĕ официальнăй йĕркепе ирĕк панă тăрăх, Толстойăн реликвийĕсене çĕмĕрсе, ватса пĕтернĕ, музей инвентарьне пĕтерсе тăкнă, юлашкинчен музее вут тивретсе хăварнă.

2) Гитлерла мерзавецсем, мĕнпур прогрессивлă этемлĕх сума сăвакан аслă писателĕн Л. Н. Толстойăн вилтăприйĕсĕнчен мăшкăлласа, вырăс халăхĕн нациллĕ тивĕçлĕхне юри кӳрентерчĕç, вырăс çыннин чыслăхĕпе нациллĕ çӳллĕ кăмăл-туйăмĕсенчен мăшкăлларĕç. Гитлерла Германие аркатса тăкнă хыççăн культурăллă тĕнче гитлеровецсене айăпласа çырнă приговорта нимĕçсем Ясная Полянăра тунă тискер преступленисем тивĕçлĕ вырăн йышăнĕç.

СОВИНФОРМБЮРО.

Мухтавлă гвардеецсем

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç хастаррăн та çирĕппĕн тăрса çапăçнине тата кĕрешӳре йĕркеллĕ те дисциплинăллă пулнине, боецсем пысăк геройлăх кăтартнине шута илсе, 107-мĕш мотострелковăй дивизие тата 8-мĕш танковăй бригадăна гвардейски чаçсем тунă. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнчи гвардеецсен йышне тата çĕнĕ вăйсем, татти-сыпписсĕр пыракан çапăçусенче çар ĕçĕ тĕлĕшпе пысăк пахалăхсем палăртнă, тăшмана пысăк ăсталăхпа çапса çĕмĕрсе, сӳнтерсе пыракан çĕнĕ чаçсем хутшăнчĕç.

107-мĕш мотострелковăй дивизи, халĕ 2-мĕш гвардейски дивизи пулса тăнăскер, июль уйăхĕнчех хăйĕн мухтавлă боевой кун-çулне пуçласа ячĕ.

Вăрçă пуçламăшĕнчех ку дивизи ăнăçуллă ĕçсем туса пычĕ: темиçе хутчен хаяр çапăçусенче пулса, вăл Германи çарĕн 20-мĕш танковăй дивизине йăлтах аркатса тăкрĕ. Ун хыççăн пĕр вĕçĕмсĕрех çакă Чанчивадзе полковник, военком Виноградов, штаб начальникĕ майор Ягодкин ертсе пыракан дивизи фронтăн чи ответлă участокĕсенче тăшмана хирĕç хаяррăн çапăçать. Тăшман пирĕн çĕршыв çинелле кĕрсе пынă вăхăтра, пĕрре çак дивизие хупăрласа хурса, çарăн тĕп вăйĕсенчен татса илнĕ пулнă. Çапла пулин те дивизи командованийĕ хăйĕн чаçĕсене малтанах йышăнма палăртса хунă вырăна питĕ йĕркеллĕн илсе тухма пĕлнĕ.

Октябрьти наступлени вăхăтĕнче нимĕçсем 107-мĕш мотострелковăй дивизие ниепле те çавăрса илме пултарайман. Дивизи хăйне аркатса тăкма паман, çав çавах вирлĕ çапăçса пынă, вăй-хăватне иксĕлтермен.

Тăшман ноябрьте тепĕр хут наступлени пуçласа ярсассăн, ку дивизи хăйĕнчен чылай вăйлă тăшмана çирĕппĕн чарса тăнă. Вăл фронтăн питĕ пысăк вырăн йышăнса тăракан участокне тĕреклĕн хӳтĕлесе тăнă, вăл ку участокра нимĕçсене малалла кĕрсе пыма паман.

Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем контрнаступлени пуçласа янă тапхăрта çак дивизие тăшман тылне, шала кĕрсе кайма хушнă пулнă. Дивизи, утлă çар чаçĕпе пĕрле тăшман тылне кĕрсе кайнă та, тăшмана пысăк сиен хӳнĕ, хăйне хушнă ĕçе питĕ лайăх туса çитернĕ.

1941 çулăн октябрь, ноябрь, декабрь уйăхĕсем хушшинче иккĕмĕш гвардейски мотострелковăй дивизи пурĕ 12300 нимĕçе вĕлерсе пĕтернĕ, 223 танк, 830 автомобиль, 76 тупă, 91 миномет, 65 пулемет, 6500 снаряд туртса илнĕ е аркатса тăкнă.

8-мĕш танковăй бригада çулйĕрĕ те çавнашкалах мухтава тивĕçлĕ. Ăна нумаях пулмасть пĕтĕçтерсе йĕркеленĕ пулин те, вăл çапăçусем енĕпе илсессĕн кĕске вăхăт хушшинчех питĕ паха традицисем туянса тĕрекленчĕ. Вăл хăватлăн кĕрешет, тăшмана ним шеллесе тăмасăр çапа-çапа çĕмĕрет. Ку бригадăна Фрунзе ячĕпе тăракан Академире вĕреннĕ Павел Алексеевич Ротмистров полковник ертсе пырать. Вăл таран шухăшлă, хăйне-хăй çирĕп тытакан командир, теори тĕлĕшпе нумай пĕлекен çын, хăйĕн вăрçăри опычĕ те унăн пысăк. Бригада военкомĕ—бригаднăй комиссар Шапалов тата штат начальникĕ майор Краснов—Ротмистров полковникăн çывăх помощникĕсем пулса тăраççĕ.

Иртнĕ çул сентябрь уйăхĕнчех-ха Ротмистровăн бригади фронтăн Сурçĕр-Хĕвеланăçĕнчи участокĕсенчен пĕринче хăйĕн пысăк активлăхне кăтартса пачĕ. Хăй çапăçнă вырăналла тăшманăн чылай пысăк вăйĕсене явăçтармалла туса, вăл вĕсене Ленинград фронтĕнчен илсе куçарттарнă. Çапла вара Ленинин хулин положенине чылай çăмăллатма май панă. Çакă вăл ун чухнехи вăхăтра калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнă. Кайрантарах, çавăн пекех пысăк вырăн йышăнса тăракан участокра тăшман темиçе хутчен те наступлени тума тапăнса пăхнăччĕ. 8-мĕш танковăй бригада çавăнта пырса çитсе, тăшмана хăйĕн малтанхи позицийĕсене каялла сирсе ывăтнă, унăн наступленине чарса лартнă.

Çывăхра Хĕрлĕ Çарăн ытти чаçĕсем çукки пе усă курса, тăшман ытти чаçсем пырса çитиччен 8-мĕш танковăй бригадăна пĕтерсе тăкма шутланă. Ăна хирĕç вăл питĕ йышлă танкĕсем, пехота тата авиаци ярса хаяр çапăçусем пуçланă. Анчах хастарлă танкистсем тăраса ӳкмен, пĕтĕм вăйĕсене пухса, тăшмана хирĕç хаяррăн çапăçса, нимĕçсен пур атакисене те сирсе пынă. Çапăçу хирĕнчен тăшманăн çĕмĕрĕлнĕ, юрăхсăра тухнă машинăсене пухса илнĕ, бригадăна аркатса тăкма паман. Наступлени туса пыракан тăшманăн фронтне 8-мĕш бригада октябрĕн 24-мĕшĕнче татса кĕрет те противникăн тылĕнче питĕ хăюллăн çапăçать, нимĕçсен наступленине чарса лартать. Кун хыççăн танкистсем тăшмана тата питĕ вирлĕн пырса çапаççĕ, унăн техникине тата чĕрĕ вăйне пĕтерсе тăкаççĕ, шыв çинче Германи пехотине илсе пыракан 10 лодкăна путараççĕ. Тăшманăн ку вырăнта ирĕксĕрех наступление чарса лартса, урăх вырăнсенчен пулăшу ыйтса, урăх дивизисене чĕнсе илме тивет. Вăйсене пухса, вăл каллех наступлени тума тапăнса пăхать, анчах та 8-мĕш бригада, пирĕн ытти чаçсем пырса çитессе кĕтсе тăмасăрах, тăшмана атакăлама тытăнать. Тăшманăн вăйне вăл пĕтĕмпе пекех аркатса, пĕтерсе тăкать. 8-мĕш бригада тăшмана çавăн пек хăюллă та вирлĕ пыра-пыра çапнипе пула ку фронтра пысăк хăрушлăха сирсе янă.

Сентябрĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 28-мĕшĕччен, татти-сыпписĕр хаяр çапăçусенче 8-мĕш дивизи, халĕ 3-мĕш гвардейски танковăй бригада пулса тăнăскер, нимĕçсен 10.000 салтакне ытла пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 161 танк, 452 автомашина, тĕрлĕ йышши 150 тупă, 140 пулемет, 190 мотоцикл, 12.000 снаряд, 8.000 мина тытса илнĕ е пĕтерсе тăкнă.

Çакăн пек ĕнтĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн гвардейски 2 çĕнĕ чаçĕсен мухтавлă ĕçĕсем, çавăн пек вĕсен кĕскен кăна илсе çырнă послужной спискĕ. Чыс та мухтав вĕсене! Çĕнĕ çĕнтерӳсем тума сĕнер вĕсене! Нимĕнрен те хакли—тăшман çине хăвăрт наступлени туса пыччăр, ăна çирĕпленсе ларса, йĕркене кĕме ан паччăр, пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе кĕнĕ оккупантсене ытларах та ытларах пĕтерсе пыччăр. Çакна сунатпăр эпир вĕсене.

П. ЛИДОВ.

(«Правда», январĕн 12-мĕш).

Киров хулине йышăнса илни

Паян Совет Информаци Бюровĕ пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутрах Киров хулине (Смоленск облаçĕ) йышăнса илни çинчен пĕлтерчĕ. Киров хулишĕн пулса иртнĕ çапăçусем çинчен кĕскен каласа паратпăр.

Противника Сухиничи, Мещовск тата Мосальск районĕсенче питĕ вăйлăн пырса çапнă хыççăн пирĕн чаçсем темиçе кун хушшинче тăшмана татах темиçе вуншар километр хăваласа кайнă. Противник хăшпĕр рубежсенче çирĕпленсе ларма хăтланса, хаяррăн хирĕç тăнă, анчах унăн ĕçĕсем ăнăçлă пулман. Пирĕн чаçсем, нимĕç автоматчикĕсен уйрăм ушкăнĕсене пĕтере-пĕтере тăкса, тăшманăн урри кĕли çине таптасах хăваласа пынă.

Киров хули патне совет войскисем тăшман пачах та кĕтмен тапхăрта пырса тухнă. Боецсем хулана çĕмĕрсе кĕнĕ. Тăшманăн çуртсемпе подвалсене пытанса ларнă автоматчикĕсем хирĕç тăнă, анчах вĕсене часах пĕтерсе тăкнă. Урамсенчи çапăçусем вăрăма пыман, анчах вĕсем хаяр пулнă. Нимĕçсен хулана хӳтĕлекен чаçĕсене аркатса тăкнă, ку чаçсен юлашкийĕсем хĕвеланăç еннелле нимĕн йĕркесĕр чакма пуçланă. Киров хулин урамĕсенче нимĕç салтакĕсен виллисем питĕ нумай выртса юлнă. Чылай трофейсем тытса илнĕ.

Нимĕçсем Киров хулинчен тухса кайнă чухне хулана вут тивретсе хăварнă, хватгерсене тискеррĕн çаратса тухнă. Хĕрлĕ Çар боецĕсем, противник хирĕç тăнине çĕмĕрсе пынипе пĕр вăхăтрах, пушарсем сӳнтернĕ, хамăрăн граждансен пурнăçĕсемпе, кил-çурчĕсене, пурлăхĕсене çăлса хăварнă.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНӐҪЕ

Парторганизаци ҫук колхозри комсомол организацин ӗҫӗсем

ВАРНАР. Комсомолӑн Иртеменкассинчи «Победа» колхозри пуҫламӗш организацийӗ хӑйӗн ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑтӗ хушнӑ пек туса пырать. Ку организацинче пӗтӗмпе 9 комсомолец. Вӗсен пурин те ответлӑ ӗҫсем пур. Шанса панӑ ӗҫсене комсомолецсем тӑрӑшса пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ.

Кашни комсомолец — колхозри чи лайӑх агитатор. Комсомолец-агитаторсем Оборонӑн Государственный Комитечӗн Председателӗ И. В. Сталин юлташ Октябрь кунӗсенче каланӑ сӑмахсене кашни колхозник патне ҫитерессишӗн тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Юратнӑ ҫулпуҫӑн витӗмлӗ сӑмахӗсемпе хавхаланнӑ колхозниксем ҫакӑн хыҫҫӑн страховкӑна ялхуҫалӑх налогӗшӗн 10.000 тенкӗ укҫа тӳлерӗҫ, колхоз государство умӗнчи мӗнпур обязательствӑсене тултарчӗ. Агитаторсем колхозниксене Совет Информаци Бюровӗ паракан кашни пӗлтерӳпе, отечественнӑй вӑрҫӑри боевой эпизодсемпе паллаштараҫҫӗ. Хӗрлӗ воинсен героизмӗпе хавхаланӑ ҫине колхозниксем фронта пулӑшассине вӑйлатнипе ответлеҫҫӗ. Колхоз ҫӗршыв оборонин фондне 97 литр сӗт, 7,8 центнер аш-какай панӑ. Халӗ вӑл 1942 ҫулшӑн 110 ҫӑмарта, 6,63 центнер аш-какай тата сӗт чылай панӑ. Ҫӗнӗ ҫул умӗн колхоз пахча-ҫимӗҫсем типӗтмелли ҫулталӑкри плана ытлашшипех тултарчӗ. Пахча-ҫимӗҫсем типӗтекен звено членӗ комсомолка Елена Курбатова кашни кунах 17—25-шер килограмм пахча-ҫимӗҫ типӗтсе, ӗҫ нормине 150—200-шер процент тултарса пычӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе йышлӑн ӗрчетни, унтан пысӑк тупӑш илни питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Колхоз выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана ытлашшипех тултарнӑ. Халь унӑн 5 ферма: ӗне, сысна, сурӑх, чӑх-чӗп тата хур фермисем. Вӗсенчен колхоз пысӑк тупӑш илет. Ӗне ферми (заведующийӗ П. Клюкова комсомолка) сӗт суса илмелли ҫулталӑкри плана иртгерсе тултарнӑ, кунта кашни ӗнерен 5354 литр сӗт суса илмелле пулсан, 5746 литр сунӑ. Старший конюх П. Николаев комсомолец та ӗҫре хӑйӗн хастарлӑхне кӑтартать. Вӑл конюхсене кашни кунах ҫӗнӗ хаҫат-журналсем вулаca парать. 1941 ҫулта колхозри темиҫе лаша Хӗрлӗ Ҫар валли юрӑхлӑ пулчӗҫ. Лашасене кунта рацион тӑрӑх тӑрантараҫҫӗ. П. Клюкова юлташ 1941 ҫулта 403 ӗҫкунӗ, П. Николаев — 448 ӗҫкунӗ тунӑ.

Колхозниксене вӑрҫӑ ӗҫне вӗрентес тӗлӗшпе те комсомолецсем пысӑк ӗҫсем турӗҫ. Халь 302 колхозникӑн ПВХО-па ГСО значокӗсем пур. ПВХО тата ГСО ӗҫӗсене вӗрентес тӗлӗшпе И. Зайцев, Анна Алексеева, З. Тябкова комсомолец-инструкторсем тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Комсомолецсем пурте, ҫав хушӑрах хӗрачасем те, обязательнӑй йӗркепе ҫар ӗҫне вӗренсе тухрӗҫ. Вӗсем винтовкӑран тӗл пеме, граната ывӑтма, Хӗрлӗ Ҫарӑн боевой тата строевой уставӗсене вӗренчӗҫ. Всевобуч отрячӗсенчен пӗринче комсомолец И. Зайцев командир пулса ӗҫлерӗ.

«Комсомол Чувашии» бронепоезда тума комсомолецсем 135 тенкӗ пачӗҫ.

Ку организацинче пухусем иртгерессине, член укҫине пухассине те манӑҫа хӑвармаҫҫӗ. Пӗр пухура П. Смирнова комсомолка ҫинчен сӳтсе-явнӑ. Вӑл хушнӑ ӗҫсене сӳрӗкрех тунӑ е пачах та итлемен. Комсомолецсен пухӑвӗ апла тума юраманни ҫинчен асӑрхаттарса хӑварнӑ хыҫҫӑн Смирнова улшӑнчӗ. Уборкӑра вӑл ӗҫ нормине 200-шер процент тултарса пычӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлеме кадрсем вӗрентсе хатӗрлесси пысӑк ыйту пулса тӑрать. Колхозри комсомол организацийӗ районра организациленекен курссене яма чи лайӑх комсомолецсене уйӑрнӑ. Халь П. Клюкова тракторӗстсен курсӗнче, Е. Курбатова хурт-хӑмӑр утарӗнче ӗҫлеме вӗренеҫҫӗ.

Колхозра парторганизаци ҫук. Ҫавӑнпа та комсомол организацийӗ колхозри ӗҫсемшӗн пысӑк ответлӑх тытать. «Победа» колхозри комсомол организацийӗ ӑна чыслӑн пурнӑҫлать.

В. МАКСИМОВ.

Комсомолка-патриоткӑсем

ИШЛЕИ. Вӗсем пурте хӑюллӑ та патвар комсомолкӑсем. Пӗри тепринчен хастарлӑрах та хавасларах. Пӑхма куҫ тулли. Епле-ха чӗрери ӑшӑ кӑмӑлпа хисеплесе пӑхмӑн ҫак ҫамрӑк патриоткӑсем ҫине. Кирек хамӑн та вӗсемпе пӗрле пулса чӗререн савӑнса ӗҫлес килет.

Маруся Балтмакова, Вера Малышева, Тося Савельева, Тоня Рязанова... ҫырса та пӗтерес ҫук, ҫирӗммӗрен те иртет вӗсен йышӗ. Вӗсен пӑнчӑрав пек янравлӑ юррисем, пыв юххи пек илемлӗ ташшисем, ӗҫре вӗресе тӑракан хӑюллӑ вӑй-халӗсем такама та савӑнтараҫҫӗ, ӗҫлес кӑмӑла ҫӗклеҫҫӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчех ҫак ҫамрӑк комсомолкӑсем медсестрасемпе сандружинницӑсен курсӗнче вӗренчӗҫ, ПВХО нормисене пачӗҫ. Вӗсен хастарлӑхӗ яланах иксӗлми пысӑк. Халӗ райцентрта ҫак патриоткӑсенчен ятарласа йӗлтӗрҫӗсен команди организациленӗ. Вӗсем ӗҫ хыҫҫӑн тата канмалли кунсенче, арҫынсемпе танах, йӗлтӗрсемпе ҫӳреме вӗренеҫҫӗ, 60 сехетлӗ программӑна вӗренме тытӑнчӗҫ те ӗнтӗ. Малтанхи занятисенче вӗсем йӗлтӗрсене пӑхса усрасси ҫинчен вӗренчӗҫ. Ҫитес кунсенче ҫак команда 5 километрлӑ похода кайса килме хатӗрленет.

Йӗлтӗрсемпе ҫӳреме вӗренсе ҫитнӗ хыҫҫӑн ҫамрӑк патриоткӑсем программа тӑрӑх йӗлтӗрсем ҫинче винтовкӑран пеме, штыксемпе тӑрса ҫапӑҫма, граната ывӑтма вӗренме пуҫлаҫҫӗ.

Ҫамрӑк патриоткӑсен ӗҫӗсем ку ҫеҫ мар-ха. Вӗсем ялхуҫалӑхӗнче квалификациллӗ рабочисем пулса ӗҫлеме хатӗрленеҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршыв хаяр кунсене пурӑнса иртгернӗ вӑхӑтра ҫак комсомолкӑсен, мӗнпур ӗҫҫыннисенни пекех, чӗрисем тӑшмана курайманлӑхпа ҫунаҫҫӗ. Вӗсем пурте тӑван ҫӗршывӑн кунҫулӗшӗн тӑрӑшаҫҫӗ, тискер тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкма хӑйсен ӗҫӗсемпе Хӗрлӗ Ҫара пулӑшаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем, 15 комсомолка, ӗҫ хыҫҫӑн тракториcткӑсен курсне вӗренме ҫӳреҫҫӗ.

З. МИТРОФАНОВА.

ВЫЛЬӐХ ӖРЧЕТЕС ӖҪ ВАРМАР ТАТА ЧКАЛОВСКИ РАЙОНСЕНЧЕ

Юлашки икӗ-виҫӗ ҫул хушшинче Вӑрмар тата Чкаловски районсенче колхозсен обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхӗ вӑйлӑн ӳсрӗ. Колхозсем ҫӗнӗ фермӑсем туса лартрӗҫ, выльӑхсен йышне ӳстерчӗҫ тата унӑн продуктивноҫне хӑпартрӗҫ. 1941 ҫулта выльӑх ӗрчетес плане нумай колхозсем иртнӗ кӗркунненех планран нумай иртгерсе тултарнӑ, апат ҫителӗклӗ таран хатӗрленӗ, выльӑхсене хупма ӑшӑ витесем тунӑ.

Вӑрмар районӗнчи Ҫӗнӗ Мӑрат колхозӗ иртнӗ кӗркунне ӗне, пӑру, сурӑх витисем ҫӗнӗрен туса лартрӗ. Ҫавӑн пекех Кивӗ Мӑрат колхозӗ те 25 ӗне валли, 20 пӑру валли, 100 сурӑх валли ҫӗнӗ витесем туса лартрӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес, унӑн продуктивноҫне хӑпартас ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тума партипе правительство ӗҫшӗн хушса тӳлемелле туни вӑйлӑн пулӑшрӗ. Ӗҫшӗн хушса тӳлемелли йӗркене ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекенсем нумай хут лайӑхрах ӗҫлеме тытӑнчӗҫ, выльӑхсен продуктивноҫне хӑпартрӗҫ. Вӑрмар районӗнчи 15-мӗш партсъезд ячӗпе тӑракан колхоз ферминчи доярка К. Алексеева юлташ 10 ӗнерен 9 уйӑх хушшинче 10.923 литр сӗт суса илнӗ. План тӑрӑх 8.908 литр суса илмелле пулнӑ. Ҫапла, К. Алексеева юлташ ҫав ӗнесенчен планран иртгерсе 2015 литр сӗт суса илчӗ. Уншӑн вӑл ӗҫшӗн хушса тӳлемелли йӗрке тӑрӑх 302 литр сӗт илчӗ. Ҫавӑн пекех доярка А. Васильева та ӗнесенчен планран иртгерсе сӗт суса илнӗшӗн ӗҫшӗн хушса тӳлемелли йӗрке тӑрӑх 375 литр сӗт илчӗ.

«Большевик» колхоз членӗ (Вӑрмар р.) М. Григорьевӑн хӑйне пӑхма ҫирӗплетнӗ сурӑхсенчен план тӑрӑх 216 килограмм ҫӑм илмелле пулнӑ, вӑл 310 килограмм ытла илнӗ. Ҫакӑн пек хастарлӑ ӗҫленӗшӗн 9 килограмм ытла ҫӑм илчӗ. Ҫавӑн пекех Чкаловски районри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗ А. Толстов юлташ та планран иртгерсе 30 килограмм ҫӑм илнӗ, вӑл путексене те лайӑх пӑхса ҫитӗнтернӗ. Толстов юлташ ӗҫшӗн хушса тӳлемелли йӗркепе 3 килограмм ҫӑм тата 4 тир илчӗ.

Молотов ячӗпе тӑракан колхозра чӑх-чӗп ферминче ӗҫлекен А. Малинина хӑй пӑхакан чӑхсенчен ҫӑмарта илес плана ытлашшипех тултарчӗ. А. Малинина юлташ ӗҫшӗн хушса тӳлемелли йӗрке тӑрӑх 224 ҫӑмарта илчӗ. Чкаловски районра ӗҫшӗн хушса тӳлемелли йӗрке тӑрӑх пурӗ 13 доярка, 3 конюх, сурӑх пӑхакансем 15 ҫын натурӑпа ялхуҫалӑх продукчӗсем илеҫҫӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тата унӑн продуктивноҫне хӑпартас тӗлӗшре пысӑк ҫитӗнӳсем тунине пула Вӑрмар тата Чкаловски районсенчи нумай колхозсем государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен тата планран иртгерсе парса татрӗҫ.

Чкаловски районри «Звезда» колхоз государствӑна аш-какай парас плана июнь уйӑхӗнчех тултарнӑ. «Красный Октябрь» колхоз государство умӗнчи 1941 ҫулти обязательствӑсене пурне те пурнӑҫланӑ, 1942 ҫулшӑн государствӑна 54 центнер ытла тырӑ, 74 килограмм аш-какай панӑ. Димитров ячӗпе тӑракан колхоз (Вӑрмар р.). государство умӗнчи пур парӑмсене те парса татса 1942 ҫулшӑн 96 килограмм аш-какай панӑ.

Колхоз хресченӗсем Сталин юлташ чӗнсе каланине пурнӑҫлама хӗрӳллӗн тытӑнчӗҫ. Тӑван Хӗрлӗ Ҫара, ҫӗршыва пулӑшса колхозниксемпе колхозницӑсем государствӑна ытларах аш-какай, сӗтҫу, тӗштырӑ, чӗртавар хатӗрлесе парассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Колхозсен обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхне ӗрчетес ӗҫ,е ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тӑваҫҫӗ.

Анчах Вӑрмар тата Чкаловски районсен ҫӗрӗҫ пайӗсем тата хӑшпӗр колхозсен руководителӗсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе, унӑн продуктивноҫне ҫӗклес тӗлӗшпе ҫителӗклӗн ӗҫлесе пымаҫҫӗ-ха. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе хальхи вӑхӑтра уйрӑмах вӑйлатма кирлине пур колхозсенче те мар ӑнланса илнӗ. Руководительсен тимсӗрлӗхне пула Вӑрмар тата Чкаловски районсенчи хӑшпӗр колхозсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе 1941 ҫулти плана тултарман, государствӑна аш-какай, сӗт-ҫу, ҫӑмарта парса татман. Ситмӗш, Ямпай, Ойкасси колхозӗсенче (Вӑрмар р.), «Звезда», «Красный Октябрь», Крупская ячӗпе тӑракан колхозсенче (Чкаловски р.) 1941 ҫулта сысна ӗрчетес плана пурнӑҫламан. Вӑрмар районӗнчи 6 колхозра сысна ӗрчетес ӗҫе пӑрахӑҫланӑ. Ку районсенче иртнӗ ҫулхи октябрь тата ноябрь уйӑхӗсем хушшинче колхозсен обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх шучӗ чылай чакнӑ. Шутнерпуҫ колхоз ферминче юлашки уйӑхсенче майӑракаллӑ шултӑра выльӑхсем 10 пуҫ, икӗ сысна, икӗ сурӑх вилнӗ. Колхоз выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес плана нимӗнле выльӑхсем енӗпе те пурнӑҫламан. Чкаловски районри «Правда» колхоз иртнӗ ҫулӑн юлашки уйӑхӗсенче базара тухса 15 сурӑх, «Кзыл-тан» колхоз 18 сурӑх, Сталин ячӗпе тӑракан колхоз 72 сысна ҫури сутнӑ. Ку колхозсен ҫав выльӑхсене ытти колхозсене парса выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес плана пурнӑҫлама пулӑшмалла пулнӑ.

Нумай колхозсенче ҫамрӑк выльӑхсене усрама ӑшӑ витесем хатӗрлемен-ха, вӗсене пӑхса ӳстерес ӗҫе ҫителӗклӗ лайӑх туса пымаҫҫӗ. Вӑрмар тата Чкаловски районсем 1941 ҫулта ҫамрӑк выльӑхсене пӑхса ӳстерес плана пӗр тӗслӗ выльӑхпа та пурнӑҫламан. Вӑрмар районӗнче сысна амисенчен пурӗ 6 ытла ҫӑвӑр, Чкаловски районӗнче 6 ҫӑвӑр ҫеҫ илнӗ. Ҫамрӑк выльӑхсем чылай вилкелеҫҫӗ-ха. Ҫапла, иртнӗ 11 уйӑх хушшинче Вӑрмар районӗнчи колхозсенче 22 тиха, 19 пӑру, 95 путек, ҫӗршер ҫӑвӑр сысна вилнӗ. Ҫавӑн пекех Чкаловски районра та 16 тиха, 14 пӑру, 76 путек, 81 ҫӑвӑр сысна вилнӗ. Фермӑсенче выльӑхсене пӑхас ӗҫе тӗрӗс организацилемен, унта ӗҫлекен ҫынсем час-часах улшӑнса тӑраҫҫӗ.

Ҫамрӑк выльӑхсем тӗреклӗ ҫитӗнесси пӗтӗмӗшпех лайӑх пӑхнинчен тата тӗрӗс тӑрантарнинчен килет. Ҫавӑнпа ҫамрӑк выльӑхсене ӑшӑ витесенче усрани кӑна сахал, вӗсене пӗлсе тӑрантарни кирлӗ. Норма тӑрӑх тӑрантармалла, кашни колхозӑн ку тӗлӗшпе выльӑх апатне расходламалли план тумалла. Выльӑх апатне епле майпа ҫитерсен выльӑхсем ытларах ӳсме пултарнине шута илсе ӗҫлемелле. Фермӑсенче ӗҫлекен кашни работникӑн выльӑх-чӗрлӗх ӳстерес ӗҫре хӑйӗн ответлӑхне туйса илмелле. Пирӗн колхозсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре кӑҫал ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тумалла. Ҫамрӑк выльӑх-чӗрлӗхе ӑшӑ, ҫутӑ витесенче кирлӗ пек тӑрантарса усраса, кӑҫал выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе татах та вӑйлатмалла.

А. МИТРОФАНОВА.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн инструкторӗ.

Авӑн ӗҫне васкасах вӗҫлемелле

КАЛИНИНО. Авӑн ҫапас ӗҫе ку таранччен тӑсса пыракан колхозсен руководителӗсем хӑйсен ӗҫри ҫитменлӗхӗсене витсе, ӗҫ кая юлнине вӑй ҫитменни ҫине тӳнтереҫҫӗ. Уйкас Явӑшри Калинин ячӗпе тӑракан колхозра 395 гектар ҫинчен пуҫтарса кӗртнӗ тырпула ҫапмалла пулнӑ. Паянхи куна вӗсем 130 гектар ҫинчен пухнӑ тырпула кӑна ҫапнӑ-ха, урӑхла каласан, вӑл 33 процент кӑна пулать. Мӑн Явӑшри Ленин ячӗпе тӑракан колхозра (председателӗ С. Данилов) авӑн ҫапса пӗтермен. Ку колхозра тракторпа ҫапмалли молотилка ӗҫлемесӗрех ларать. Колхоз председателӗ Данилов: молотилка патӗнче ӗҫлеме ҫынсем ҫук, тет. Ҫакӑ ӗнтӗ пачах вырнаҫусӑр сӑмах, мӗншӗн тесен кашни бригадӑра ӗҫлеме пултаракан 6—7 ҫын пур. 7 бригадӑра вӑл 42—49 ҫын пулать. Ҫапла вара авӑн ҫапнӑ ҫӗрте кашни талӑкра пӗр смена ӗҫлеттерме май пур. Апла пулсан та авӑн ҫапас ӗҫе организацилемен.

Авӑрҫырмари «Дружба» колхозра та ӗҫ вӑйӗпе тӗрӗс усӑ курма пӗлмеҫҫӗ. Икӗ лаша вӑйӗпе ӗҫлекен молотилка патӗнче кашни кун 15 ҫын ӗҫлет. Ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ. Анчах вӗсем кун касиччен 6 центнер ҫеҫ ҫапаҫҫӗ. Ҫак молотилкӑпах 5—6 ҫын тӑрӑшсах ӗҫлесен, лайӑххах ӗлкӗрсе 6 центнер ытла ҫапса илме пултараҫҫӗ. Авӑна алӑпа ҫапнӑ ҫӗрте те ӗҫ вӑхӑтӗпе туллин усӑ курмаҫҫӗ, кашни кун 20—25 ҫын ӗҫлесе 10—12 центнер ҫеҫ ҫапаҫҫӗ. Анчах ҫакна колхоз председателӗ М. Григорьев юлташ тавҫӑрса илмен-ха. Ӗҫ вӑйӗпе кирлӗ пек усӑ курса, авӑн ҫапас ӗҫе хӑвӑртлатман. Шнакассинчи «Броневик» (председателӗ Скворцов), Кивкасри «Большевик» (председателӗ Александров), Сӑкӑтри Буденный ячӗпе тӑракан (председателӗ Данилов), Шӗнерти «1-ое мая» (председателӗ коммунист В. Иванов) тата ытти колхозсенче те авӑн ҫапас ӗҫ начар пырать. Ҫак колхозсен руководителӗсем авӑн ҫапас ӗҫе хӑйсем организацилес чухне «ӗҫ вӑйӗ ҫитменни» ҫине тӳнтерсе ним тумасӑр тӑраҫҫӗ.

Айкашри Киров ячӗпе тӑракан, Кӳлхӗрринчи «Трактор», Кӑкшӑмри «Ӗҫ ялавӗ», Ямбахтинӑри «Партизан» (председ. коммунист Семенов) паянхи ыранах авӑн пӗтеретпӗр тесе райҫӗрӗҫ пайӗн работникӗсене шантарма тытӑнни чылай пулать. Апла пулин те, ку колхозсенче халӗ те авӑн ҫапса пӗтермен-ха. Чылай руководительсем, «пирӗн нумай юлман» тесе лӑпланса ларса, авӑн ӗҫӗсене вӑраха яраҫҫӗ.

Райҫӗрӗҫпайӗн специалисчӗсем 15 ҫын авӑн ҫапас ӗҫре пулӑшма колхозсене тухса кайрӗҫ. Вӗсен колхозниксене авӑн ҫапас тӗлӗшпе ҫак кунсенчех татӑклӑ улшӑну тума пулӑшмалла.

Т. БЕЛОВ.

Пионерсен дружинин ӗҫӗсем

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Ҫӗнӗ Мӑратри туллимар вӑтам шкулта 1941—42 ҫулсенчи вӗренӳ ӗҫӗ пуҫлансанах пионерсен дружини организациленӗ. Дружинӑра пурӗ 100 ача тӑрать. Дружинӑна пионерсен юратнӑ вожатӑйӗ, шкулти физкультура руководителӗ И. К. Куприянов учитель ертсе ырать.

Пионерсен дружининче йӗлтӗрҫӗсен команди, санитарсен звенисем, пулеметчиксем, пехотинецсем пур. 7 ҫынтан штаб организациленӗ. Пионерсенчен 8 командир уйӑрнӑ. Вӗренӳ штаб ертсе пынипе пулса пырать.

Пионерсен дружининчи ачасем стройпа тӗрӗс утма, винтовкӑна тыткалама, йӗлтӗрпе ҫӳреме, наступление кайма тата ыттисене те лайӑх вӗреннӗ. Кунсӑр пуҫне санитарсен звени практикӑллӑ занятисем чылаях иртгернӗ.

Пионерсен дружини 3 хутчен тактикӑллӑ заняти тунӑ. Вӗсенчен декабрӗн 25-мӗшӗнче пулса иртнӗ тактикӑллӑ заняти уйрӑмӑнах ӑнӑҫлӑ пулнӑ. Ку тактикӑллӑ задание «Н-ски пунктшӑн ҫапӑҫни» (икӗ отряд хушшинче пулмалли вӑйӑ) темӑпа иртгернӗ. Тактикӑллӑ занятие 78 ача хутшӑннӑ. Пионерсем тактикӑллӑ занятисенче хӑйсем тунӑ 2 ручной пулемет, 1 станковӑй пулемет, 40 винтовка макечӗсемпе усӑ курнӑ. Вӗсен кашнинех граната макечӗсемпе кӗреҫесем пулнӑ.

Пионерсен дружининчи ачасем 2 ушкӑна уйӑрӑлнӑ. Пӗр ушкӑнӗ Ҫӗнӗ Мӑратран икӗ ҫухрӑмра ларакан Тугай ялне кайнӑ. Вӗсене Потапенко командир ертсе пынӑ. Тепӗр ушкӑнӗ Куприянов ертсе пынипе «тӑшмансем йышӑнса илнӗ» Тугай ялӗ ҫине наступлени тунӑ. Кунта Куприянов ертсе пыракан ушкӑнти боецсем хӑйсен паттӑрлӑхне кӑтартнӑ. Н. Макарова атакӑра 4 винтовка макечӗ, 1 йӗлтӗр тытса илнӗ. Константинов йӗлтӗрҫӗ-разведчик разведкӑна кайсан «тӑшман» ӑҫта вырнаҫнине, унӑн вӑйне лайӑх пӗлсе килнӗ. Вара унӑн кӑтартӑвӗсем тӑрӑх «тӑшмана» аркатса тӑкнӑ. Кунта Степанов пулеметчик хӑйӗн паттӑрлӑхне кӑтартнӑ. Пионерсем атакӑна кӗнӗ чухне:

— Малалла! Тӑван ҫӗршывшӑн, Сталиншӑн!—тесе кӑшкӑрнӑ. Заняти пӗтсен митинг тунӑ. Унта пионерсем:

— Эпир—пулас боецсем, малалла та вӑрҫӑ ӗҫне ҫакӑн пек лайӑх вӗренсе, тӑшмана пӗтерсе тӑкакан хӑватлӑ вӑй пулса ҫитӗнетпӗр,—тенӗ.

Пионерсен дружинин занятийӗсенче Совет Информаци Бюровӗн пӗлтерӗвӗсене вуласа параҫҫӗ. Шкул ачисене ҫар ӗҫне вӗрентес енӗпе шкул ҫавӑн пекех ПВХО, ГСО кружокӗсем организациленӗ. Ҫав кружоксене пур ачасене те явӑҫтарнӑ. Халӗ кружоксенчен 70 ача вӗренсе тухнӑ.

Шкул ачисем тӑван ҫӗршыв оборонине тӗреклетес ӗҫе активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Вӗсем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 92 тенкӗ, оборона фондне 43 тенкӗ укҫа пухса панӑ. Укҫа-тенкӗпе япала лотерейин билечӗсене 60 тенкӗлӗх илме ҫырӑнса укҫине парса татнӑ.

В. ВИКТОРОВ.

Шкул ачисен пулӑшӑвӗ

ЭЛЕК. Мӑн Тукташри туллимар вӑтам шкулта вӗренекен ачасем фронта пур майпа та пулӑшаҫҫӗ. Ҫак кунсенче шкул ачисем государствӑна 64 килограмм кӑпчанкӑ тымарӗ пухса панӑ.

Кунпа пӗрлех ачасем колхоз производствинче те активлӑн хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем, Мӑн Тукташри Максим Горький ячӗпе тӑракан тата Кӗҫӗн Тукташри «Сунтал» колхозсенче ӗҫлесе, 1000 ӗҫкунӗ тунӑ. Шкулта отлично вӗренекен Ульяна Антонова, Аркадий Малов тата Зинаида Ефремова (7-мӗш класс), кашни 60-шар ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ.

М. ЯСТРАН.

ҪАР ӖҪНЕ ВӖРЕНЕКЕНСЕНЕ ПУЛӐШМА

Халӑх пурӑнакан пункт ҫине наступлени тӑвасси

Халӑх пурӑнакан пункта оборона валли лайӑх хатӗрленӗ пулсан, ун ҫине наступлени тӑвасси—йывӑр задача, анчах ҫапах та ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртме май пур. Ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртнӗ чухне пӗрре яланлӑхах туса хатӗрленӗ план тӑрӑх мар, кашни уйрӑм пункт патӗнчех обстановкӑна шута илсе тата атакӑн пӗр-пӗр мелне суйласа илсе ҫапӑҫса наступлени туса пымалла.

Ҫапла, сӑмахран, Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсем К. ялӗ ҫине (Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ енӗ) наступлени тунӑ чухне, ҫак ялта ҫирӗпленсе ларнӑ фашистсем пирӗн боецсене яла ҫӗрле астарса кӗртсе, ирхине вара вӗсем ҫине кӗтмен ҫӗртен тапӑнма хӑтланса пӑхнӑ. Ҫак плана Хӗрлӗ Ҫарӑн наступлени тӑвакан чаҫӗсен командованийӗ тӗплӗн разведка туса, тӗпчесе пӗлнӗ. Вара пирӗн боецсем хӑйсен атакине ирччен хӑварнӑ.

Ҫак ялта урамсенче пулса иртнӗ хаяр ҫапӑҫусем вӑхӑтӗнче политрук заместителӗ Рудич юлташ питӗ паха пуҫарулӑх кӑтартса панӑ. Пирӗн боецсем йышӑнса илнӗ пӗр пысӑк ҫурт патӗнче питӗ хаяр ҫапӑҫу пулса пынӑ. Фашистсем ҫак ҫуртран пирӗн боецсене гранатӑсемпе хӗссе хӑварма тӑрӑшнӑ. Тапӑнса пыракан фашистсен вӑйне сирес тесе, Рудич юлташ ручной пулеметпа ҫул ҫине чупса тухнӑ та вӗсем ҫине пеме пуҫланӑ. Тӑшманӑн пысӑкрах пайӗ ун хыҫҫӑн хӑвалама тытӑннӑ. Рудич юлташ пере-пере пирӗн боецсем йышӑнса илнӗ тепӗр ҫурт патнелле чакса пынӑ та питӗ хӑвӑрт ҫак ҫурта кӗрсе пытаннӑ. Фашистсем ҫакна асӑрхаман пирки, ку ҫурт умӗнчен чупса иртсе кайнӑ. Вара Рудич юлташ вӗсем ҫине хыҫалтан персе, тӑшманӑн вунӑ салтакне яхӑн вӗлерсе пӗтернӗ.

Халӑх пурӑнакан пункт ҫине наступлени тӑвасси вӑл питӗ йывӑр ӗҫ, ҫавӑнпа та ҫав операцие тумашкӑн питӗ тӗплӗн хатӗрленмелле. Халӑх пурӑнакан пункт ҫине наступлени туни ӑнӑҫлӑ пултӑр тесен, чи малтанах питӗ лайӑх разведка тумалла. Халӑх пурӑнакан пунктӑн планне, тӑшманӑн оборона системине тата хирӗҫ тӑмалли пунктсем пуррине тӗпчесе пӗлмешкӗн аэрофотосъемка тумалла.

Халӑх пурӑнакан пункт ҫине тӑвакан наступление яланах тенӗ пек артиллерирен вӑйлӑн персе тата авиаципе вӑйлӑн тапӑнса хатӗрленеҫҫӗ. Ҫакӑн пек хатӗрленнин задачи—противникӑн огневой точкисене пусарасси, яла кӗрсе кӗнӗ ҫӗрте туса лартнӑ баррикадӑсене аркатса тӑкасси, паллӑрах уйрӑм сооруженисене ишӗлтересси, тӑшманӑн резервӗсене, штабӗсемпе тылри ытти учрежденийӗсене аркатса тӑкасси пулать.

Атакӑна пӗр вӑхӑтрах мӗнпур фронт тӑрӑшшӗпех пуҫласа яраҫҫӗ те чи малтанах ял тулашӗсене пырса тапӑнаҫҫӗ. Наступлени тӑвакан подразделенисем ял тулашне йышӑнса илсен, пӗчӗкшер группӑн уйӑрӑлса, тӑрӑхла урамсемпе, картишсемпе пахча-садсем урлӑ малалла куҫса, халӑх пурӑнакан пунктӑн варринелле кӗрсе пыраҫҫӗ.

Анчах ку ӗҫе яланлӑха хатӗрлесе хунӑ пӗр план тӑрӑх туса пыма юрамасть. Кунта та пуҫарулӑх, обстановкӑна час ӑнланса илме пӗлни кирлӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсем Ш. хули ҫине (Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ енӗ) ҫакнашкал планпа наступлени туса пынӑ. Пирӗн темиҫе танк хула центрне ҫӗмӗрсе кӗнӗ. Урамра пулса иртнӗ ҫапӑҫусем вӑхӑтӗнче пирӗн танкистсем тӑшман группировкин огневой точкисем, батарейисем тата штабӗ ӑҫта-ӑҫта вырнаҫнине тӗпчесе пӗлнӗ. Унтан вара наступлени пуҫланса кайнӑ. Малта фронт тӑрӑх танксем пынӑ, танксем ҫине пехотӑна лартнӑ пулнӑ. Танксем хыҫҫӑн кавалеристсен чаҫӗ ҫурран стройпа наступлени туса пынӑ. Фашистсем тупӑсемпе минометсенчен темӗнтери вӑйлӑн персе тӑнӑ хушӑра пирӗн танксем хулан кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ хӗррине ҫӗмӗрсе кӗнӗ те тӑшманӑн огневой точкисене пусарса лартнӑ. Ҫак вӑхӑтра хулан кӑнтӑрти тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫӗнчи пайӗсене кавалеристсем шашкисене ялтӑртаттарса вӗҫтерсе пырса кӗнӗ. Урамсенче кавалеристсем хаяррӑн ҫапӑҫма тытӑннӑ. Нимӗҫсем нимӗне пӗлмесӗр «козакен!» тесе ҫухӑрашса хула варринелле кайнӑ. Ҫак вӑхӑтра гранатӑпа тата штыкпа ҫапӑҫакан пехотинецсем пырса ҫитнӗ. Фашистсем, хӗҫпӑшалӗсене, автомобилӗсене, мотоциклӗсене пӑрахсах, каялла саврӑнса пӑхмасӑр тарнӑ.

Урамсенчи ҫапӑҫусенче взводсемпе отделенисем час-часах пӗр-пӗринчен уйӑрӑлса вӑрҫаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ ҫакӑн пек операцисене тунӑ чухне пехотӑн подразделенийӗсене пулеметсемпе, минометсемпе, артиллерипе (чи малтанах орудисенчен уйрӑмӑн уйрӑмӑн тата тӳрӗ тӗллесе пеме), саперсемпе, химиксемпе тата танксемпе вӑйлатмалла. Чӑрмавсене ҫӗнтерсе илме — алӑксене ватма, хӳмесене шӑтарса кӗме т. ыт. ӗҫсене тума та пехотӑна ломсем, пуртӑсем, кирка-мотыгӑсем, ҫавнашкалах тата юри тунӑ хурҫӑ щитсем е тӑпра тултарнӑ михсем (бойницӑсене питӗрсе хума), кантӑра пусмасем памалла. Урамри ҫапӑҫусем тӑвӑр условисенче пулса иртнӗ пирки, пехотӑн ручной гранатӑсем нумай пулмалла. Урамри ҫапӑҫу условийӗсенче ручной гранатӑсем ҫуртсене, хӳмесем хыҫне, баррикадӑсем хыҫне, подвалсенче пытанса ларнӑ противника пӗтерсе тӑкмалли чи лайӑх хӗҫпӑшал пулса тӑраҫҫӗ.

Урамсенче икӗ енӗпе куҫса пымалла. Наступлени тӑваканнисен, противник пенинчен хӳтӗленес тесе, ҫуртсем ҫумнерех ҫыпҫӑнмалла. Боецсем, урамӑн тепӗр енчи ҫуртсене сӑнаса, пӗрин хыҫҫӑн тепри куҫса пыраҫҫӗ. Станковӑй пулеметсемпе уйрӑм орудисем, пехота хӳтӗленипе, тапхӑрӑн-тапхӑрӑн куҫаҫҫӗ.

Танксен пехотӑпа таччӑн ҫыхӑнса тӑрса ҫапӑҫмалла. Вӗсем яланах тенӗ пек пехота валли ҫул тасатса малта пыраҫҫӗ: противникӑн огневой точкисене пусараҫҫӗ, баррикадӑсене таптаса аркатаҫҫӗ е тупӑсенчен персе ишӗлтереҫҫӗ, противник урлӑ урамсенче пытанса персе тӑрассинчен хӳтӗлеҫҫӗ.

Ҫул ҫинче тӗл пулакан чӑрмавсене, баррикадӑсене уйрӑм орудисенчен персе е танксемпе аркатса тӑкаҫҫӗ. Ҫак ӗҫе тумашкӑн тата саперсене те явӑҫтарма пултараҫҫӗ. Аркатса тӑкма май килмен баррикадӑсене штурмласа илеҫҫӗ, е картишсем урлӑ тавралла ҫаврӑнса тылран илсен татах та лайӑхрах.

Противник йышӑннӑ ҫуртсене илме орудисенчен, минометсенчен, танксен тупписенчен персе, тата пехота персе тӑнипе хатӗрленеҫҫӗ. Орудисенчен перҫӗ, е картишсем урлӑ тавралла ҫавӑҫсем ҫине персе противникӑн вутне пусарса лартать.

Атакӑлакан ҫурт ҫине [illegible]рсе (тӑма противникран татса илнӗ юнашар ҫуртсемпе усӑ курса, вӗсем ҫине унта наступлени тӑвакансен огневой средствисене вырнаҫтарса лартма юрать. Атака тӑвакан пехота пульӑсем тивмен вырӑнпа усӑ курса, ҫурт патне ҫывхарса пырать. Ҫурт патне ҫывхарса ҫитсен, атакӑлакан пехотинецсем стенасенчи шӑтӑксемпе чӳречесем витӗр ҫурт ӑшнелле ручной гранатӑсем ывӑтаҫҫӗ те, вара ҫурт ӑшне ҫӗмӗрсе кӗрсен, хирӗҫ тӑракан противника штыкпа, прикладпа, кӗреҫепе пӗтерсе тӑкаҫҫӗ.

Калинин хулинчи урамри ҫапӑҫусем вӑхӑтӗнче фашистсем пӗр ҫурта минӑсем лартса тухнӑ. Вӗсем ку ҫурта красноармеецсем кӗнӗ хыҫҫӑн сирпӗнтерсе яма шутланӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех тата взрыв тӑшманшӑн атака пуҫласа ямалли сигнал пулнӑ. Анчах пирӗн разведчиксем ҫурта минӑсем лартнине вӑхӑтрах тӗпчесе пӗлнӗ. Ҫурта пирӗн боецсем сирпӗнтерсе янӑ. Взрыв сассине илтсен, фашистсем тухса малалла ыткӑннӑ. Вӗсем пирӗн боецсем пӗтнӗ тесе шанса тӑнӑ. Анчах вӗсем пирӗн засада ҫине пырса тухнӑ. Пирӗн боецсем вӗсем ҫине пеме пуҫланӑ. Ҫакна пула тӑшмана пӗр кварталтан ҫапса кӑларнӑ.

Противник контратака тума ан пултартӑр тесе, атакӑлакан пунктсемпе кварталсене артиллери вучӗпе картласа уйӑраҫҫӗ.

Питех те тӗплӗн ҫирӗплетнӗ ҫуртсене вут тивертсе ҫунтарса яраҫҫӗ е вӗсене урӑх ҫуртсенчен уйӑрса хураҫҫӗ. Уйрӑм ҫуртсемпе районсене хупӑрласа уйӑрмашкӑн юри палӑртнӑ подразделенисем тӑваҫҫӗ.

Урамсем пӗр-пӗрин урлӑ каҫса кайнӑ вырӑнсенче, уйрӑмах, противникӑн урлӑ урам тӑрӑх перекен огневой средствисене вӑхӑтра шыраса тупса пӗтерсе хумалла.

Халӑх пурӑнакан пункт ӑшӗнче шалта наступлени туса пынӑ чухне чи малтанах телеграфпа телефон станцийӗсене, водопровод станцийӗсемпе электростанцисене тата ытти паллӑрах сооруженисене тытса илме тӑрӑшмалла.

Урамсенче пулса иртнӗ ҫапӑҫусем пире ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: наступлени тӑвакан чаҫӑн халӑх пурӑнакан пунктра куҫса пынӑҫемӗн хӑй ҫӗнтерсе илнӗ территорие ҫирӗплетсех пымалла. Уйрӑм ҫуртсене ҫирӗплетмелле, хӑшпӗр ҫуртсенче гарнизонсем те хӑвармалла, мӗншӗн тесен оборона тӑвакан противник ку ҫуртсене каллла тавӑрас тесе контратакӑсем те тума пултарать.

Халӑх пурӑнакан пунктран чакса тухса кайнӑ чухне противник час-часах засадӑсем организацилет. Ҫавӑнпа та халӑх пурӑнакан пункта противникран питӗ тӗплӗн тасатмалла.

Йышӑнса илнӗ пунктсене саперсем тӗплӗн тӗпчесе пӑхса тухса, противник пӑрахса хӑварнӑ взрыв тӑвакан зарядсемпе минӑсенчен тасатмалла. Тулашӗнчен пӑхсан оборона валли майлаштарма май килмен пек курӑнакан ҫуртсене те тӗплӗн пӑхмасӑр иртсе кайма юрамасть, мӗншӗн тесен Германи фашисчӗсем контратака тума уйӑрнӑ подразделенийӗсене шӑпах ӗнтӗ ҫакӑн пек ҫуртсенче вырнаҫтарса тухаҫҫӗ.

Урамри ҫапӑҫусене яланах тенӗ пек пӗр-пӗринчен уйрӑм подразделенисем, час-часах тата пӗчӗк группӑсем те туса пыраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ҫак ҫапӑҫусенче пур командирсен те, чи малтанах кӗҫӗн командирсен, ҫавнашкалах тата рядовой боецсен те пуҫарулӑ пулмалла, боевой задачӑсене хӑй тӗллӗн татса пама, татӑклӑ решенисем йышӑнма пӗлмелле. Паттӑрлӑхпа хӑюлӑх, пултарулӑх—Хӗрлӗ Ҫар боецӗсене тивӗҫлӗ ҫак пахалӑхсем урамри ҫапӑҫусене пуринчен ытларах кирлӗ.

Полковник З. ГАРЕЕВ.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Январĕн 13-мĕшĕнче Куйбышев хулинче пулса иртнĕ пресс-конференцире Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ ютçĕршыв корреспонденчĕсем панă ыйтусем çине ответленĕ.

Корреспондентсенчен пĕри:—Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов 1942 çулти январĕн 6-мĕшĕнче янă хăйĕн нотинче нимĕç войскисем хăйсем йышăнса илнĕ совет районĕсенче тăвакан çаратусемпе тискерлĕхсене кăтартса панă фактсене хирĕçлесе, Германи информаци бюровĕ тунă заявленине Эсир мĕнле хак паратăр?—тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла ответ панă:

«Германи правительстви Германи çарĕ тăвакан тискерлĕхсене тунма çеç мар, тата çав тискерлĕхсемшĕн айăпне Совет Правительствипе Хĕрлĕ Çар çине йăвантарма тăрăшса хăтланса пăхни ĕнтĕ уголовнăй тĕнчере анлăн усă куракан ирсĕр те сĕмсĕр меслет пулса тăрать. Хăйне хăвалакансенчен таракан вăрă: «Вăрра тытăр!» тесе кăшкăрать.

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн нотинче Германин пусмăрçисемпе çынвĕлерен сем хăйсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет территорийĕсем çинче тунă тата халĕ те тăвакан тискерлĕхсен пĕчĕк пайне çеç кăтартса панă. Çынна вĕлернĕ бандита тытсан, хăй тунă преступленисен пур доказательствисем те куç умĕнчех пулсан та, вăл яланах хăйĕн усал ĕçĕсене тунма тăрăшать; çапла тунипе ĕнтĕ вăл суд членĕсене кăшт та пулин иккĕлентерме май килмĕ-ши тесе шанать. Çак уголовнăй тĕнчене тивĕçлĕ меслетсемпе хăнăхусем никама та ĕнентерме пултараймаççĕ. Германи çарĕ хăй оккупациленĕ çĕршывсенче тата Совет Союзĕн вăхăтлăха йышăнса илнĕ облаçĕсенче мĕнтери пысăк преступленисем тунине пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать, çавăнпа та ĕнтĕ Гитлер правительствин ответ тытассинчен пăрăнса юлма май килмĕ».

Тепĕр корреспондент:—господин Иден Мускавра пулнă хыççăн тата 26 государствăн декларацине алă пусса çирĕплетнĕ хыççăн Германири хаçатсем: Европăпа Америкăна большевикланса каясси хăратса тăрать, тесе çине тăрсах кампани пуçласа яни тĕлĕшпе Эсир мĕн шухăшлатăр? — тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла ответленĕ:

«Кунта эпĕ Геббельсăн пропагандăллă камитне çеç куратăп. ССР Союзĕпе ирĕклĕхе юратакан ытти халăхсем хушшинчи туслăх çирĕпленсе пынине пула гитлерла Германире ытларах та ытларах пăшăрханма пуçланине Геббельсăн мĕнпе те пулин хупăрласа пытарас пулать вĕт-ха. Юлашки вăхăт хушшинче гитлерла хаçатсем Англия тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Европăна сутса ячĕç, Англия тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Европăна Америкăна большевиклантарса яма килĕшрĕç, тесе сухăрашаççĕ. Тĕрĕс ниме, нимĕççен Германи халăхĕпе Совет Союзĕн халăхĕ валли туса пыракан хăйсен агитацийĕ çине тăрсах: Совет правительстви ССР Союзне Англири тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене плутократсен аллине парать, тесе çирĕплетме тăрăшаççĕ. Çапла ĕнтĕ, англичансемпе американецсем Великобритание Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене — большевизмпа сутăн килен, большевизмпа Совет Союзне — англичансемпе американецсене сутă пулать. Ку ĕнтĕ пропаганда мар, урса кайса сухăрашни çеç пулса тăрать. Çакăнта Гитлерпа ун тавраши çынсен гитлерла системăн кунçулĕшĕн хăрани палăрать. Нимĕççен пĕр вăхăтрах пире — плутократсене, пирĕн союзниксене — большевизмпа хăратни ĕнтĕ вĕсен сухăла кайнине, политика тĕлĕшĕнчен чухăнланнине кăтарса панинче фактсем пулса тăраççĕ».

Темиçе корреспондент: — Финляндири лару-тăру çинчен Эсир мĕн шухăшлатăр? — тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла каланă:

«Финляндия гитлерла Германи аллинчи хĕçпăшал пулса тăрать, экономика тĕлĕшĕнчен юхăннă, хăйĕн юнне тăкса пĕтернĕ, нимĕççен аллине чурлăха кĕрсе ӳкнĕ Финляндия нумаях тытăнса тăма пултараймасть, тесе эпĕ Сире пĕрре каланăччĕ. Финлянди халăхĕ çавтери выçăхса, чухăнланса тата тарăхса çитнĕ. Паллах ĕнтĕ, Финляндире нимĕççене кураймани çавтери çивĕчленсе кайнă; çав кураймалăх, пĕр енчен, нимĕç салтакĕсем тата, тепĕр енчен, финн салтакĕсемпе финн халăхĕ хушшинче пулса иртекен хирĕçӳсенче час-часах палăрса тăрать. Çавнашкалах тата финн халăхĕ мир тăвас тесе тăрăшнинчен, «Аслă Финляндия» текен империализмла лозунгсемпе витĕнсе гитлерла Германин интересĕсене пула финн халăхне юн тăкма хĕтĕртекен авантюристсем çине кураймасăр пăхнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Малашнехи событисем мĕнле аталанса пырасси çинчен халех каласа пама йывăр-ха, анчах та оккупациленĕ ытти çĕршывсенчи пекех, Финляндире те халăх массисем нимĕççене кураймани паллă».

Нумай корреспондентсем: — вăрçă лару-тăрăвне Эсир мĕнле хаклатăр?— тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла каласа панă:

«Эпĕ вăрçă лару-тăрăвĕ Совет Союзĕшĕн усăллă пулса пырать, çавăн чухлех гитлерла Германишĕн начар пулса пырать, тесе шутлатăп. Гитлер, Хĕвеланăçĕнчи вăрçа октябрь уйăхĕнчех вĕçлеме сăмах панăскер, татах йăнăш турĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче нимĕççен çарĕ питĕ пысăк çухатусем тунине Германири халăх пĕлет. Нимĕç салтакĕсем хăйсен килĕсене яракан çырусем вĕсем — нимĕç салтакĕсен питĕ хăвăрт çывхарса килекен вилĕмне кăтартакан татти-сыпписĕр нăйкăшусем пулса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çар вăйлăн пыра-пыра çапнине пула, нимĕççен темиçе дивизине аркатса тăкнине пула тата Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фрончĕн чылай участокĕсенче нимĕç войскисен ирĕксĕрех чакма, тепĕр чухне тарма тивнине пула, гитлерла çарсене ишĕлтерсе пыракан хирĕçӳсем чылаях çивĕчленчĕç. Германи çарĕн салтакĕсем хушшинче пораженилле шухăш-кăмăлсем, пессимизм, Совет Союзне парăнтарма май çуккине ытларах та ытларах ĕненсе пырасси, кирек епле пулсан та, пур меслетсемпе те усă курса Совет Российинчен чĕррĕн таврăнма тăрăшни ӳснĕçемĕн ӳссе пыраççĕ. Çав вăхăтрах генералитет ăшĕнче те, генералитетăн пĕр пайĕпе Гитлер партийĕн руководителĕсем хушшинче, хирĕçӳсем вăйланса пыраççĕ. Германи халăхĕ выçлăха, кĕлмĕçлĕхе тата питĕ пысăк çухатусене пула çавтери тертленсе çитнĕ. Гитлерла Германин фрончĕпе тылĕ тĕпренех кисрене пуçларĕ. Çак вăхăтрах совет войскисем хăйсен наступленийĕсемпе [illegible]

[illegible]

сем тесе калама [illegible] Калуга, Керчь, Феодосия, Мало-Ярославец [illegible]

[illegible] тăшмана [illegible] пĕтерсе пыраççĕ».

Нимĕççен ăнăçсăр контратаки

[illegible]

МИШУЛОВИН.

(«Известия» хаçат, январĕн 13-мĕш).

Англи хаçат-журналĕсем В. М. Молотов ноти çинчен мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçатăн политикăллă обозревателĕ Каминго «Германи влаçĕсем хăйсем тытса илнĕ совет территорийĕсем çинче пур çĕрте те халăха çаратса юхăнтарни çинчен тата тискер кайăкла çавтери хăрушă ĕçсем туни çинчен» Ютçĕршыв ĕçĕсен халăх комиссарĕ В. М. Молотов юлташ янă нота çинчен çапла çырать: çак нота вăл эпĕ хăçан та пулсан курнă нотăсенчен чи хăратмалли, çав вăхăтрах вăл тата чи тĕрĕс те чи тĕплĕн çырнă нота пулса тăрать, тет.

«Санди диспетч» хаçат В. М. Молотовăн нотине пĕтĕмпех пичетленĕ. Нотăн текстĕ хаçатра 9 колонка йышăннă. Шултăра саспаллисемпе пичетленĕ заголовокра нотăна «Пĕтĕм тĕнчене кисретекен нота» тесе палăртнă.

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ Англин çар завочĕсенче пулнă

ЛОНДОН, январĕн 13-мĕш. (ТАСС). Иртнĕ эрнере совет профсоюзĕсен делегацин групипи, Ситрин ертсе пынипе, Англири оборонăна вăйлатас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсемпе паллашнă. Совет профсоюзĕсен делегачĕсем, пысăк предприятисенчи рабочисен пухăвĕсенче сăмахсемпе тухса, производствăна ӳстерме кирли çинчен каланă. Англи рабочийĕсемпе профсоюзсен руководителĕсем совет делегачĕсене пур çĕрте те тăванла ăшă кăмăлпа хавассăн кĕтсе илнĕ. Ливерпуль хулинче совет делегацийĕ пĕр кун кунĕпех Мерсей юханшывĕн икĕ енĕпе те ларакан пысăк рабочи центра бомбăсем пăрахса çĕмĕрнине пăхса çӳренĕ. Ливерпульри пĕр пысăк верфьре ĕçлекенсен пухăвĕнче совет профсоюзĕсен делегацийĕн председателĕ Шверник юлташ сăмах тухса каланă. Çакăн хыççăн совет делегацийĕ авиаци валли вăйлă моторсем туса кăларакан пысăк завода пырса курнă, унта вĕсем бомбардировщиксен производствипе паллашнă. Юлашкинчен делегаци Ливерпульри пĕтĕм тĕнчипе паллă пулса тăракан дока пырса курнă. Ку докра 30.000 рабочие яхăн ĕçлет. Германи пропаганди Ливерпульри чаплă док бомбăсем пăрахнипе йăлтах юрăхсăра тухнă текен хыпар сарни тĕрĕс мар иккенне совет делегачĕсем хăйсен куçĕпех курнă.

Германин çар корреспонденчĕсем салхуллăн çыраççĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). Германире тухакан хаçатсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче условисем йывăрри пирки малалла та ӳпкелешсе çыраççĕ. Пĕр çар корреспонденчĕ «Берлинер берзенцейтунг» хаçатра çапла çырать: «Вырăс фронтĕнчи çапăçусен характерĕ хĕлле тĕпренех улшăнчĕ. Пирĕн войскăсем атакăсем туса малалла куçса пырасси чарăнса ларчĕ. Нумай чаççене каялла чакма тиврĕ. Вырăссем фронта çĕнĕ дивизисем янă тата ударлă группăсем тунă. Пирĕн салтаксен противник пĕр чарăнмасăр хаяррăн атакăсем туса пынине тӳсме тата каялла чакса пыма тивет. Çапăçусем ытла та хаяррăн пулса пыраççĕ. Çĕр темиçе метр хулăмĕш шăнса ларнă, çавăнпа окопсем чавас пулсан, врубовой молотоксемпе е тата взрыв тăвакан япаласемпех усă курмалла пулать. Противник пирĕн укрепленисене вĕçĕмсĕр атакăлать. Атакăсем час-часах 4—8 хутчен умлă-хыçлă пулса пыраççĕ».

«Берлинер локальнцейгер» хаçатăн çар корреспонденчĕ халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçу çинчен çавăн пекех салхуллăн çырать. «Вырăссем,—тесе çырать вăл,—ял хĕррине пырса çитрĕç. Вĕсене эпир пачах та тенĕ пекех сиенлеме пултараймастпăр, мĕншĕн тесен вĕсем шурă халатсем тăхăннă та пĕртте палăрмаççĕ. Кунсăр пуçне вĕсем пирĕн снабжени çулĕсене татрĕç. Пирĕн ĕçсем чаплă мар. Полк командирĕ пире телефон тăрăх пирĕн ял патне вырăссен танкĕсем çывхарса пыни çинчен пĕлтерет, противникăн пĕр танкне те пулин пĕтерсе лартсан пĕр бутылка эрех пама сăмах парать. Çĕрле сивĕсем хаярланаççĕ. Куççулĕ çийĕнчех шăнса ларать. Эпир витĕр çапакан çилрен чĕтресе тăратпăр. Танксене пĕтерекенсем нимĕнсĕрех каялла таврăнаççĕ. Пирĕн орудисем противникăн танкĕсем патне 1500 метртан çывăхарах пырайман».

«Гамбургер фремденблатт» хаçат çапла каласа хурать: «Хĕвеллĕ Крымра» канас шанчăк сăланса кайрĕ ĕнтĕ вăл, тет. «Хура тинĕс çинче, — тесе çырать хаçат,—вырăс эсминецĕсем ишсе çӳреççĕ, çыран хĕрринчи çулсем çине переççĕ. Пуç тăрринче вырăссен бомбардировщикĕсем вĕçсе çӳреççĕ, тĕтреллĕ ту хушăкĕсенче вырăссен ударлă отрячĕсем пытанса тăраççĕ».

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: январĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Вильгельмсгафенри тинĕс бази çине тата Эмден çине вăйлăн тапăнса нумай бомбăсем пăрахнă. Çавнашкалах тата Голландири аэродромсемпе Булоньри доксем çине те бомбăсем пăрахнă. Çыран хĕрринчи авиацин самолечĕсем, Голланди çыранĕ çывăхĕнче вĕçсе çӳресе, противникăн вăйлă хуралпа пыракан суднисен каравашĕ çине тапăннă. Нефть турттармалли пĕчĕк судно çине тата пысăк грузовой пароход çине бомба лекнине палăртнă. Çак операцисенчен хăйсен базисене 6 бомбардировщик таврăнман.

Çав каçах, январĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух, противникăн авиацийĕ Англие, ытларах хĕвелтухăç енчи çырансене вĕçсе пырса чылай активлăн тапăннă. Бомбăсем пăрахни ытла пысăк сиенсемех туман. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур. Противникăн пĕр самолетне пĕтерсе тăкнă.

Англи самолечĕсем Вильгельмсгафен çине пырса тапăнни çинчен тĕплĕнрех пĕлтерни

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви Англи бомбардировщикĕсем январĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германин Вильгельмсгафенри пысăк тинĕс-çар бази çине пырса тапăнни çинчен тĕплĕнрех пĕлтерет. Çĕр тĕттĕм пулнă пулин те, юр çинче чугунçул линийĕсем лайăххах курăнса тăнă. Çакна пула Англи штурмовикĕсем чугунçул станцине тата тинĕс-çар базине тупма пултарнă. Çав тапăнура пулнă летчиксем каланă тăрăх, нумай бомбăсем гавань çине тата хула çине ӳкнĕ, вара темиçе тĕлте пушар тухнă. Пушар сути питĕ вăйлă пулнă, çавăнпа Англи летчикĕсем хулари уйрăм çуртсене çăмăллăнах уйăрса илме пултарнă. Хула çинче çур сехет хушши вĕçсе çӳренĕ пĕр эскадрильйăн летчикĕсем каланă тăрăх, нумай бомбăсем суднăсем тăвакан верфь районĕнче çурăлса кайнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 13-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви кăларнă коммюникере çапла кăтартса панă: Лусон утравĕ çинчи (Филиппин) фронтăн талккăшĕпех артиллерирен хирĕ-хирĕç персе тăраççĕ. Фронта Япони çарĕсен çĕнĕ чаçĕсем пыраççĕ.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 13-мĕш. (ТАСС). Англин Малайăри войскисем, противникăн вăйлă чаçĕсем хĕссе пынипе, Куала-Аумпуртан кăнтăр еннерехре тăракан çĕнĕ позицисене чакаççĕ. Япони авиацийĕ англичансен войскисем тăракан вырăнсем çине тапăнса бомбăсем пăрахать. Çав хушăрах Япони самолечĕсем Сингапур çине пырса тапăнма та хăтланнă.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 13-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çапла пĕлтернĕ: Борнео утравĕн хĕвелтухăç çыранĕнчи гарнизон, противникăн пысăк вăйне хирĕç тăма пултарайман пирки, хăйĕн вăрçă ĕçĕсене чарнă. Гарнизонăн пĕр пайĕ Борнео утравĕ çинчен куçса кайнă. Торакан утравĕ çинчи çапăçусенче Япони войскисем пысăк çухатусем тунă. Голланди Индийĕн бомбардировщикĕсем Японин Торакан утравĕ патĕнче тăракан карапĕсене атакăланă. Çав атакăра японецсен икĕ карапĕ çине бомбăсем лекнине палăртнă.

ЯПОНИПЕ КИТАЙ ХУШШИНЧИ ВĂРÇĂ

Японин Хунань провинцинчи войскисем çапла каялла чакса пыраççĕ. Китаецсем вĕсене, флангсенчен те тата тылран та атакăласа, чылаях пысăк çухатусем кӳреççĕ. Цзянси провинцинче те, Наньчанран хĕвеланăç енчелле, çапăçусем пыраççĕ.

Комсомол райкомĕсен пленумĕсем

ИШЛЕЙ. Çак кунсенче комсомол райкомĕн черетлĕ III-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум комсомол организацийĕсем çуракине хатĕрленес ĕçре колхозсене мĕнле пулăшса пыни çинчен сӳтсе-яврĕ.

Докладчик ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Сазонов юлташ тата прение тухса калаçакансем те комсомолăн ялсенчи нумай организацийĕсем колхозсене куллен ĕçре пулăшса пыни çинчен каларĕç. Уйрăмăнах «Самолет», Жданов тата Андреев ячĕпе тăракан колхозсене палăртса хăварчĕç. Кунта комсомолецсем тăрăшса ĕçленипе иртнĕ çулти ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ, государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмĕшпех тултарнă, çуракине те тимлĕн хатĕрленеççĕ. Хăймалакассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем Жданов ячĕпе тăракан колхоза куллен пулăшса пыраççĕ. Авăн çапнă çĕре тăтăшах 12-шер çын ярса тăнă. Шкул ачисем 198 центнер вăрлăх сортланă. Колхозри ялхуçалăх инвентарĕсене юсанă. Ярапайкассинчи туллимар вăтам шкулти комсомолецсем пуçарнипе шкул ачисем кашниех 20 витререн кая мар кĕл пухма тата 5-шер щит çыхма пулнă. Лашасене пăхма шефа илнĕ.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, районра çуракине хатĕрленесси çителĕксĕр пырать-ха. Тĕслĕхрен, кăçал 40.000 тонна торф, 45.000 тонна тислĕк хатĕрлеме, 3.500 центнер кĕл пухма, 8.000 гектар çинче юр тытма палăртнă пулсан, ку ĕçе паян куна çитсе тытăнманпа пĕрех. Уйрăмăнах юр тытас ĕç начар пырать. Хăшпĕр колхозсенче урапасем çителĕксĕр, ялхуçалăх инвентарĕсем юсавсăр. Комсомолецсем председатель пулса ертсе пыракан колхозсем те («Тимĕрçырми», «Родина», «Восток» т. ыт.) халĕ те авăн çапса пĕтермен-ха. Çуракине хатĕрленме тытăнман та. Плутсене уйрах лартакан колхозсем те пур. Комсомолăн асăннă колхозсенчи организацийĕсен секретарĕсем ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ, колхоз производствин ыйтăвĕсемпе интересленмеççĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра вĕçлессишĕн тăрăшмаççĕ, çуракине хатĕрленесси çинчен шутламаççĕ.

Пленум комсомол организацийĕсене çитес çуракине хатĕрленес ĕçре пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме, 1942 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн колхоз çамрăкĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма хушрĕ. Комсомолецсемпе шкул ачисен вăйĕпе 3 пин гектар çинче юр тытма, 3.500 центнер кĕл, 2.200 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухма тата пур колхозсенче те комсомолецсемпе çамрăксенчен вăрлăхсем сортлама бригадăсем организацилеме йышăнса хăварчĕ. Çавăн пекех тата мартăн 15-мĕш тĕлне ялхуçалăх инвентарĕсене юсаса пĕтерессишĕн колхозсенчи çамрăксене ертсе пыма хушрĕ.

1942 çулти çуракине лайăх хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе пленум комсомолăн районри организацийĕсен ячĕпе Сĕнтĕр районĕнчи организацисене социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

* * *

ÇĔРПУ. Январĕн 12-мĕшĕнче ВЛКСМ райкомĕн 5-мĕш пленумĕ пулчĕ. Пленум икĕ ыйту—комсомол организацийĕсен 1942 çулти çураки вăхăтĕнчи ĕçĕсем тата профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулакан кросне хатĕрленсе ирттерессi çинчен сӳтсе-яврĕ.

Пĕрремĕш ыйту тăрăх ВКП(б) райкомĕн секретарĕ И. Скворцов юлташ доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче комсомолăн колхозсенчи организацийĕсем çуракине хатĕрленес ĕçе çителĕксĕр хутшăнни çинчен чарăнса тăчĕ. «Оборона» колхоз паянхи куна та çуртырри вăрлăхне уйăрса хуман, ялхуçалăх машинисене юсама тытăнман, вырăнти удобренисене пухассине организацилемен. Колхоз хĕллехи агротехникăллă мероприятисене пурнăçласа пымасть. «Парижская коммуна», «Красная Бавария», «Красный Октябрь» тата ытти колхозсенче те çуракине хатĕрленес ĕç начар пырать. Комсомолăн колхозсенчи организацийĕсем ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн, çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатассишĕн начар кĕрешеççĕ, вĕсем ытти колхозниксене ĕçре ертсе пымаççĕ.

Иккĕмĕш ыйту тăрăх ВЛКСМ райкомĕ çумĕнчи çарпа физкультура енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссин председателĕ Ефремов юлташ доклад турĕ. Докладчик кроса хатĕрленес ĕç педучилищĕре, Вăрикассинчи вăтам шкулта, «Новая жизнь», «Цивильстрой» колхозсенче аван пынине палăртрĕ. Ку организацисенче командăсене йĕркеленĕ, массăллă тренировкăсем пулса иртеççĕ.

Анчах комсомолăн районри чылай организацийĕсенче кроса хатĕрленесси начар пырать-ха. Комсомолăн «Коснария», «Куканар», «Словаш», «Оборона», «Планета» колхозсенчи организацийĕсем уйрăмăнах начар хатĕрленеççĕ.

Пленум çак ыйтусемпе тивĕçлĕ решенисем йышăнса хăварчĕ.

Г. ПЕТРОВ.

* * *

СĔНТĔР. Комсомол организацийĕсем çуракине хатĕрленес ĕçе мĕнле хутшăнни çинчен тата кроса хатĕрленес ĕç районра мĕнле тăни çинчен ВЛКСМ Сĕнтĕр райкомĕн нумаях пулмасть пулса иртнĕ 4-мĕш пленумĕ сӳтсе-яврĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа докладчик та, тухса калакансем те комсомолăн колхозсенчи хăшпĕр организацийĕсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕç тунине палăртрĕç. «Красное Сормово», «Çĕнĕ Юнга», «Свобода» колхозсем вăрлăхсене çителĕклĕ таран хатĕрленĕ. Вĕсем ялхуçалăх машинисене те юсаса çитерне, уя юр тытса хăварас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Анчах комсомолăн районри чылай организацийĕсем колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре çителĕксĕр пулăшаççĕ. «Родина», «Ударник», «1-ое августа» колхозсем ку таранччен те вăрлăхсене сортласа пĕтермен, вырăнти удобренисене пухассине йĕркелемен, ялхуçалăх машинисене юсама тытăнман.

Çак ĕçе ВЛКСМ райкомĕ те çителĕксĕр ертсе пынине палăртрĕ пленум. Комсомол организацийĕсене пурне те ялхуçалăх машинисене тĕрĕслесе тухса юсас тĕлĕшпе пыракан уйăхлăха активлăн хутшăнма, колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшса пыма хушса хăварчĕ.

Иккĕмĕш ыйту тăрăх районри комсомолецсемпе çамрăксем кроса хатĕрленес ĕçе активлăн хутшăнни çинчен каласа пачĕç.

Комсомолăн НКВД районри отделенийĕнчи, Сĕнтĕр вăтам шкулĕнчи, «Коминтерн» колхозри организацийĕсем темиçе хутчен тренировкăллă занятисем, походсем, йĕлтĕрлĕ ăмăртусем туса ирттернĕ. Кроса хутшăнмалли çынсене медицина енĕпе тĕрĕслес ĕçе йĕркеленĕ.

Анчах пленум кроса хатĕрленес ĕçе пур комсомолецсемпе çамрăксем те хутшăнманнине, хăшпĕр организацисен йĕлтĕрсем çителĕксĕррине, вĕсем ăна тăвасси çинчен шухăшламаннине те палăртрĕ.

Кроса хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене кăтартса хăварса, пленум тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Радиокомитет сотрудникĕсем Радиокомитет председателĕн Александров юлташăн ывăлĕ

ВАЛЕРИЙ

вăхăтсăр вилни çинчен унăн семьйăванĕсене хурланса пĕлтереççĕ.

ЧЕБОКСАРСКИЙ

КОММУНАЛЬНО-СТРОИТЕЛЬНЫЙ ТЕХНИКУМ

об'являет дополнительный прием студентов на I, II и III курсы

НА 1941—1942 УЧЕБНЫЙ ГОД

Техникум готовит техников-строителей по промышленному и гражданскому строительству.

Срок обучения 3 года. Прием заявлений с 5 января по 25 января. К заявлению должны быть приложены следующие документы:

а) автобиография;
б) свидетельство об окончании НСШ (в подлиннике);
в) три фотокарточки (снимок без головного убора);
г) свидетельство о рождении;
д) справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных);
е) паспорт пред'являеться при личной явке.

На первый курс принимаются без испытаний:

а) окончившие НСШ в 1941 году;
б) 8 и 9 классы средней школы.

На второй курс принимаются без испытаний окончившие полную среднюю школу (десятилетка, рабфак, училище, школа для взрослых) с условием обязательной сдачи в течение второго семестра общетехнических и специальных дисциплин, входящих в программу первого курса.

На третий курс принимаются ранее учившиеся в техникуме и не окончившие его по каким-либо причинам.

Студенты общежитием не обеспечиваются. Приезжим оплачиваются квартирные в размере 20—25 рублей в месяц.

Начало занятий 8-го февраля 1942 года.

Заявления направлять по адресу: г. Чебоксары, Чувашской АССР, улица Ярославская, 54. Чебоксарский Коммунально-Строительный техникум.

Для ответов должны быть вложены в конверты почтовые марки на 60 коп.

ДИРЕКЦИЯ.

3—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, [illegible] пайĕсен — 6—85, [illegible] рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйĕ — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—45, издательство конторин — [illegible]—23.

НТ 491. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательства и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.